Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
АПРЕЛ
10
ВЫРСАРНИКУН
82 (1895)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ:
Город Чебоксары,
ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

ПАРТИ ОРГĂНĔСЕН ОТЧОЧĔСЕМ

Пайан Мускаври пуçламĕш парторганизацисенче партин йертсе пыракан оргăнĕсене суйлама пуçлаççĕ. Кирăв йачĕпе тăракан „Динамо", „Калибр" савăтсенчи, Орджоникидзе йачĕпе тăракан станкосавăтри, Илйич йачĕпе тăракан савăтри, Клара Цеткин йачĕпе тăракан хапрăкри тата столицăри ытти шултра предприйатисенчи парти комитечĕсем хăйсен отчочĕсене тума пуçлаççĕ. Çывăх кунсенчех пур çĕрте те отчотпа суйлав кампанийĕ сарăлса кайать. Пиншер парти комитечĕсем хăйсен çулталăк хушшинчи ĕçĕ çинчен коммунистсем умĕнче отчот туса параççĕ.

Парти оргăнĕ хăйне суйланă организаци умĕнче отчот туни—вăл болшевикла парти пурнăçĕн, ĕçĕн никам пăсайми саккунĕ. Болшевиксен партийĕ йаланах демократилĕ централисăм принципĕсене çирĕппĕн пăхăнса пынипе тытăнса тăнă: парти оргăнĕсене çÿлтен пуçласа айала çитиччченех суйлани, парти оргăнĕсем отчот туса тăни, партилĕ çирĕп дисциплинă тата аслă оргăнсен решенийĕсем вырăнти оргăнсемшĕн тата партин мĕн пур членĕсемшĕн пĕр сăмахсăрах обйазательнă пулни. Демократилĕ централисăм принципĕсенчен парти оргăнĕсем, вĕсен руководителĕсем коммунистсен пĕтĕм массипе уйрăлми çыхăнса тăма кирли тухса тăрать. Çакăн пек çыхăну формисенчен пĕри—вăл—отчот туни.

Вăрттăн сасăласа суйлани парти руководителĕсене калама çук пысăккăн шанни пулать. Çавăн пек шанасси парти руководителĕсем парти директивĕсене, парти массисен наказне пурнăçа кĕртсе пынă май сыхлăнса усранать.

Сталин йулташ партине,—парти руководителĕсен отчочĕсем—вĕсен кадрсене айалтан пит лайăх тĕрĕслени пулаççĕ, тесе вĕрентет:

„Парти массисем хăйсен руководителĕсене активсенче, конференцисенче, сйессенче вĕсен отчочĕсене итлесине, çитменлĕхсене критиклесине, йулашкинчен, ку йе тепĕр йертсе пыракан йулташсене йертсе пыракан оргăнсене суйласине йе суйламаннипе тĕрĕслеççĕ".

Партин кашни руководителĕ çулталăк хушшинчи пурнăçпа ĕç çинчен хăйĕн парторганизаци умĕнче отчот тума тивĕçлĕ, çак çулталăк хушшинче совет çĕршывĕпе коммунисла парти пурнăçĕнче пысăк событисем пулса иртрĕç. Руководител хăй халăх тăшманĕсемпе мĕнле кĕрешсе пыни çинчен, парти организацин сыхăлăхне мĕнле хăпартса пыни тата ăна ÿстерессишĕн мĕнле тăрăшни çинчен, коммунистсене мĕнле идейăла пиçĕхтерсе пыни тата çĕнĕ кадрсене мĕнле пăхса ÿстерни çинчен отчот тума тивĕçлĕ, массăсен çакăн çинчен ыйтма права пур. Коммунистсем çакна та тĕрĕслесшĕн: парти оргăнĕпе унăн руководителĕ парти массипе партире тăман массăна государствă планĕсене пурнăçа кĕртме мĕнле çĕклентерсе пынă, Сталинла Тĕп Комитетăн тата совет правителствин директивисене пурнăçа кĕртессишĕн парти организацин руководителĕ мĕн таран хăйулăн кĕрешнĕ. Парти оргăнĕн отчочĕ—вăл ПСК(б)П Тĕпкомĕн иртнĕ çулхи феврални-мартри Пленумĕ тата йанвартри Пленумĕ йышăннă решенисене кашни парти организацийĕ мĕнле пурнăçа кĕртнине чĕррĕн тĕрĕслени пулать.

Парти массисем отчотра парадри пек сăмахсем каласса кĕтмеççĕ. Руководителтен çакна ыйтаççĕ: хăйĕн ĕçĕ çинчен, çитменлĕхсем, йăнăшсем çинчен вăл парти масси умĕнче тÿрĕ кăмăлпа тата ĕçлĕн отчот туса патăр тата массăсен критикине итлетĕр. Руководител парти организаци умĕнче отчот туни—вăл пĕрпĕринчен вĕренни, пĕр-пĕрин опычĕпе пуйанлани. Массă отчотран парти оргăнĕн ĕçĕ çинчен пĕлет, вăл ĕçе критиклет тата çапла тунипе активланать пулсан, тепĕр йенчен вара, массă критиклени тата кăтартусем пани руководител ĕçне çĕнĕ сывлăш кĕртет, руководителе çĕнĕ опытпа пуйанлатать. Руководителĕн тем пек хаклă пахалăхсем пулсан та, массă мĕнпе пурăннине пĕлмест пулсан, критикăна илтмест пулсан, вăл вара суккăр пулать. Çын кирек мĕнле пысăк ĕçре пулсан та, унăн пурпĕрех массăсене вĕрентмеле çеç мар, тата масăсенчен те вĕренмеле.

Парти организацийĕ умĕнче отчот туни вăл пысăк, политикăлă ответлă ĕç. Парти оргăнĕн тата унăн руководителĕн çакăн пек отчота тимлĕн хатĕрленмеле. Халхи вăхăтра руководствăра партин çĕнĕ работникĕсем циншерĕн шутланаççĕ, вĕсенчен нумайĕшĕсем партин пысăк пухăвĕ умĕнче пĕррремĕш хут отчот тăваççĕ. Пуçламĕш организацисенчи партком секретарĕсене отчот çырма пулăшакан райкомсемпе хула комитечĕсем лайăх ĕç тăваççĕ. Акă, сăмахран, Мускаври Первомайск райкомĕ, Ленинградри Кирăвск райкомĕ отчота мĕнле çырмали çинчен партком секретарĕсене йатарласа консултаци параççĕ. Мускавпа Ленинградри чылай райкомсем отчот çырнă çĕрте парткомсене пулăшма инструктăрсем уйăрнă. Уйрăм организацисенче коммунистсем партком ĕçĕне малтанлăха паллашаççĕ, отчот çумне сĕнÿсем параççĕ.

Суйлавсене хатĕрленсе, Мускаври „Калибр" савăтĕнчи коммунистсем кун умĕнхи отчотпа суйлав пухăвĕ йышăннă решенисене мĕнле пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тухнă. Партком касхи тата çĕрлехи сменăсенче ĕçлекен коммунистсем отчотпа суйлав пухăвĕсене хутшăнса ĕçлеме пултарччăр, тесе тăрăшнă. Мускаври тепĕр савăтра—Илйич йачĕпе тăракан савăтра—ничете парти организаци ĕçне пысăккăн çутатса пыма мобилизацилене. Вырăнти парти активĕнчен савăтри „Илйичовец" хаçат редакцине вăтăр статйа ытла çырса панă. Коммунистсем çĕрлехи сменăсенче партилĕ ĕç çителĕксĕрри çине кăтартса параççĕ, партире тăман актива воспитани парас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине уçса палăртаççĕ.

ПСК(б)П Тĕпкомĕн „Партин йертсе пыракан оргăнĕсен суйлавĕсене ирттермели Инструкцийĕ" парти оргăнĕсен отчочĕсене малтан партин тивĕçлĕ комитечĕсен пленумĕсенче сÿтсе-йавасси çинчен калать. Çак вăл пĕтĕм парти комитечĕ отчотшăн коллективлăн ответ тытассине пĕлтерет. Анчах çав вăхăтрах Инструкци çапла калать:

„Отчотлă докладсене малтан парти комитечĕсен пленумĕсенче сÿтсе-йавни комитетсен пленумĕсен членĕсене парти пухăвĕсенче тата конференцисенче парти организацин руководствине критиклесине тухса калас правасăр хăвармаст".

Çак вăл акă мĕне пĕлтерет: парти комитетĕнче сăлтавсăр пĕр-пĕрне хÿтлени тата нимĕнле çемпелĕх те пулмала мар. Пĕр-пĕр комитетăн членĕ руководствăн йăнăшĕсем, çитменлĕхĕсем çинчен пĕлет пулсан,—çакăн çинчен парти пухăвĕнче каласа кăтартасси унăн тивĕçĕ пулса тăрать.

Парти комитечĕн отчочĕ парти организацине тăшмансене тĕппипех тăпăлтарса кăларма, парти организацин идейăлăполитикăлă пурнăçне çĕклеме, производствăна çĕклеме, государствă планĕсене пурнăçа кĕртме мобилизацилемеле. Парти комитечĕ хăйĕн организацийĕ умĕнче отчот туни тата партин çĕнĕ оргăнне суйлани—вăл партилĕ пурнăçа кунсерен чĕрĕлетсе пымали, партилĕ демократине малашне те вăйлатса пымали çĕнĕ хускату. ПСК(б)П уставĕ „парти оргăнĕсем хăйсен организацийĕсем умĕнче вăхăтран вăхăтах отчот тума" ыйтни—вăл парти ăшĕнчи демократин никĕсе хывнă чулĕ пулса тăрать. Партилĕ демократи çинчен Сталин йулташ каланине аса илтерĕпĕр:

„...Мĕн вăл партири демократи? Кама валли вăл демократи? Демократи тесе революцирен уйăрăлса кайнă ик-виç интелигента вĕçĕмсĕр паврама, хăйсен пичетлĕ оргăнне тытса тăма ирĕк парассине т. ыт. ăнланаççĕ пулсан, вара çавăн пек „демократи" пире кирлĕ мар, мĕншĕн тесен, вăл калама çук нумайăйнсен ирĕкне хуçакан пит сахал çынсемшĕн тунă демократи. Демократи тесе парти массисемшĕн пирĕн строителствăн ыйтăвĕсене татса парас, вĕсене партипе йертсе пырас ĕçе йавăçтарас, вĕсенче партире хуçа пулнă туйăма аталантарас ирĕклĕхе ăнланас пулсан, ун пек демократи пирĕн пур, вăл пире кирлĕ, тата епĕр ăна ниме пăхмасăрах йаланах вăйлатса пырăпăр".

Отчот туни, парти оргăнĕсем хăйсене суйланă массăсем умĕнче чăннипех ответлă пулни—тимсĕрлĕхе, хăйсене хăйсем лăпланса ларнине пĕтермели, сыхăлăха пур майсемпе те ÿстерсе пымали, работниксене айалтан тĕрĕслемели, парти массисене активлантармали тата вĕсене политикă йенчен ÿстермели чи кирлĕ майсенчен пĕри пулса тăрать.

Парти организацисен задачи —отчотпа суйлав кампанине партилĕ демократине çирĕппĕн пăхăнса тата критикăпа самокритикăна хăйулăн сарса ирттересси пулать. Парти комитечĕн политикăлă çивчĕ отчочĕ — критикăпа самокритикăна çĕклемели, партилĕ-политикăлă ĕçе малашне те лайăхлатса пыма, хуçалăхлă задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме тата парти массисене партин Сталинла Тĕп Комитечĕ тавра татах та ытларах пĕтĕçтерме коммунистсен активлăхне çĕклемели рычагсенчен пĕри.

(„Правда" умсăйи).

ССР Сойузĕн орденĕсене пани

Апрелĕн 7-мĕшĕнче ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн наградăланă командирĕсене Совет Сойузĕн орденĕсене панă, унта Президиумăн чылай членĕсем пулнă. Наградă илнисем хушшинче—комкор Йакăвлĕв, комдив Коровникăв, комбриг Кобĕлĕв Совет Сойуз Геройĕ полковник Рычагов, красноармейĕц Каштанăв, краснофлотĕцсем Жданăв, Илйухин тата ытти те.

Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарĕн наградăланă командирĕсемпе политработникĕсен йачĕпе комкор Йакăвлĕв тата виççĕмĕш ранкри капитан Челпанăв сăмах тухса каланă.

Ленинградри государствă консерваторийĕ 75 çул тултарнă май тата музыкă кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе тава тивĕçлĕ чаплă ĕçсем тунăшăн, ССРС Верховнăй Совет Президиумĕн указĕпе консерваторине Ленин орденĕпе наградăланă.

Енер Калинин йулташ çав пысăк наградăна консерватори представителĕсене панă. Çавăн пекех тата ССР Сойузĕн халăх артисĕ И. В. Йершов, профессăрсем, доцентсем тата консерваторин ытти работникĕсем те орденсем илнĕ. Вĕсен хушшинче—музыкă инструменчĕсен настройщикĕ Иефим Карпович Корзун. Халхи вăхăтра Корзун 100 çултан та иртнĕ, анчах вăл хăйне хăй маттур туйать.

ССР Сойузĕн халăх артисĕ И. В. Йершов çулăмлă та паха сăмах тухса каланă.

Унтан пăр çĕмĕрекен „Таймыр" пăрахут çинчи тата тинĕс çинчи тискер кăпăксене тытма çÿремели „Мурманĕц" суднă çинчи експедицинче пулнисем орденсем илнĕ, вĕсене кусса çÿрекен „Çурçĕр полйусĕ" станцине илсе килес тĕлĕшпе правителствă панă задание отличнă пурнăçа кĕртнĕшĕн наградăланă. Çавăн пекех ыттисем те орденсем илнĕ.

Орденсем панă хыççăн М. И. Калинин йулташ наградăланисем умĕнче сăмах каланă.

— Йулташсем,—тет Михаил Иванович,—пысăк наградă, тивĕçлĕ наградă илнисене пурне те сывлăх сунса саламлатăп.

Пайан епĕ Ленинградри консерваторине тата унти работниксене наградăлани çинчен уйрăммăн чарăнса тăрасшăн. Ленинградри консерваторине чи пысăк наградăпа—Ленин орденĕпе наградăланине епĕ чунтанах саламлатăп. Çак наградă вăл—Ленинградри консерватори тунă çитĕнÿсене рабочисемпе хресченсен правителстви тата парти пит пысăккăн хаклани çинчен калать.

Совет Сойузĕ 20 çул кăна пурăнать-ха,—истори йенчен илсе пăхсан, вăл пит сахал вăхăт,—анчах çав 20 çул хушшинче пирĕн çĕршыври рабочисемпе хресченсен çĕнтерсе, хăйсен аллине власа илмеле пулнă, ăна çирĕплетмеле пулнă, çĕршыв хуçалăхне йĕркелесе йамала пулнă, чи йăвăр условисенче социалисăмлă государствă тăвас тĕлĕшпе ĕçлемеле пулнă,—çак вăхăт хушшинче епĕр аслă лăха та, искусствăна та чылай хăпартма пултартăмăр. **(Тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Мĕне пĕлтерет вăл? Пирĕн çĕршыври рабочисемпе хресченсене аслăлăхпа искусствă çине çавăн пек пысăккăн çавăрăнса пăхма мĕнле сăлтавсем хушаççĕ? Ку вăл аслăлăхпа искусствăсене чăн-чăнах хаклакани — халăх çеç пулнинчен килет.

Пирĕн патăрти кăна мар, тата пĕтĕм тĕнчери мĕн пур талантсен историне есĕр пĕлеттĕр пулмала. Шанчăклăнах çапла калама йурать: капиталисăмлă тĕнчере пĕр çĕршывра та талантсене чăннипе хаклани çук.

Капиталисăмлă тĕнче талантлă çын умĕнче пĕр çул çеç уçса парать, вăл—унăн талантне чи тухăççăр салатса пĕтермели çул, услам илмели çул, хăйĕн талантне буржуалă публикăн йÿнĕ тути-масисемпе шăйлаштармали çул. Çак тутă, ĕçсĕр буржуалă публикăна чăн-чăн култура кирлĕ мар, вăл хăйĕн културлăхĕ йенчен пит те айалта тăрать.

Пирĕн искусствă халăха усă кÿрсе тăрать, халăха усă кÿмеле те. Пирĕн патăрта паллă музыкантсен концерчĕсене, художниксен картинисене вуншар пин çынсем итлеççĕ тата пăхаççĕ, вĕсем хăйсем хак параççĕ. Вĕсем хак пани буржуалă публикă хак панинчен кайарах пулма пултарать-и? Кайарах пулма пултараймаст. Мĕншĕн? Епĕр пĕлетпĕр, чи пултаруллă поетсем, чи талантлă композитăрсем халăх творчествипе пĕрлешсен, вĕсем халăхран палкаса тапса тухакан çăлкуçсемпе усă курсан, вĕсем халăх чунне йарса илсен хăйсен творчествинче тепĕсем пулса тăма пултарнă. Çаксемсĕр генилĕ çынсем пулма пултараймаççĕ: Илĕпĕр поетсене. Халăх йурлать, хăй музыкăлă пирки йурламасăр тăма та пултараймасть вăл. Халăх мĕншĕн музыкăлă-ха? Мĕншĕн тесен, музыкă вăл ĕç тухăçлăхне хăпартмали хăвалă фактăрсенчен пĕри пулса тăрать. Илĕр есĕр халăх йуррисене,—пурте вĕсем ĕçпе çыхăнса тăраççĕ. Илĕр халăх таçшине,—епĕр унпа пурте мухтанатпăр,—халăх чи лайăххисене суйласа илсе, ĕçлев процесĕсене пластикă формипе кăтартса парать. Пурăçене те ташăсене те халăх çĕршер çулсем хушшинче туса пынă, халăх вĕсенчен чи лайăххисене çеç хăварнă, вĕсемсĕр лайăхлатса пырса вĕçленнĕ, пулса çитнĕ формă патне илсе çитернĕ. Мĕн пур хаклă йапаласене тăваканĕ тата сыхласа усракан халăх пулса тăрать.

Пирĕн патăрта художникăн, вăл аслă художник пулас тет пулсан, халăх хушшине кайас пулать; унăн произведенийĕсем вуншар пин çынсене çĕклентерсе йамаççĕ пулсен, вăл вара палăрмасăрах йулать. Пирĕн условисенче искусствă халăхпа çыхăнни улăпла ÿссе пырать. Пирĕн музыкăлă шухăшсем, пирĕн художествăлă идейăсем халăх массисем хушшинче çулран çул тарăнрах тымарсем йараççĕ тата кунта хăйсен чечекĕсемпе çимĕçĕсене пама пуçлаççĕ те ĕнтĕ. Акă мĕншĕн çак наградă уйрăмах хаклă. Правителствă искусствă организацийĕсемпе çыннисене наградă панă чухне, халăх искусствă служителĕсемпе çыхăну тытни ÿссе пынине шута илет.

Малала Калинин йулташ совет искусстви Хĕрлĕ Çарпа çыхăну тытни калама çук пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен паллă туса калать.

— Искусствăна Хĕрлĕ Çар хушшинчи çыхăну,—тет вăл,—вăл искусствăпа ĕç хушшинчи çыхăнувах, мĕншĕн тесен халхи вăхăтра Хĕрлĕ Çар пире кирлĕ, искусствă пирĕн Хĕрлĕ Çара вăйлатать. Ку вăл Испани çĕршывĕн тĕслĕхĕнчен те курăнать, унта искусствăн паллă деятĕлĕсем пурте хăйсен творчествине революцилĕ çара илсе пыраççĕ тата хăйсем те вăл çара унăн бойецĕсем пулса пыраççĕ. Пирĕн патăрта çав сойуз калама çук тачă пулмала, çавăн чухне вара музыкă, искусствă калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрĕç.

Мана Ленинградри консерватори наградăна пĕтĕмĕшпех тÿрре кăлартăрччĕ тесе çеç те мар, тата вăл пирĕн музыкă културин йалтăртатса çутатса тăракан центрĕ пултăрччĕ, тесе сунма ирĕк парăр. Аçта та пулин музыкă чăн-чăнах чечекленни пур пулсан, вăл Совет Сойузĕнче çеç пулнине, аçта та пулин музыкă искусствине вĕренмели пур пулсан, вăл Ленинградри консерваторинче пулнине—Совет Сойузĕн тулашĕнчи кашни музыкант пĕлсе туйса тăтăр. **(Нумайччен тăвăллăн алă çупаççĕ).**

Совет Сойузĕ тăрăх

●● Совет Сойузĕн геройĕсем—Папанин, Кренкĕл, Федăрăв йулташсем апралĕн 8-мĕшĕнче Харьков хулине çитнĕ. Хула çыннисем çĕршывăн чаплă ывăлĕсене, Çурçĕр полйусне çĕнтерекенсене хĕрÿлĕн кĕтсе илнĕ.

●● Апрелпе май уйăхĕсенче Украинăра 144 вырăнта вылйăх-чĕрлĕх тата кайăк-кĕшĕк сутас тĕлĕшпе колхозсен çуркуннехи йармăркисене туса иртереççĕ. Суту-илÿ организацисем йармăркăсене 12.300 пин тенкĕлĕх промышлĕннăç таварĕсем илсе тухаççĕ.

●● Кăçал Казахстанра çĕнĕрен 240 пуштă уйрăмĕ организацилеççĕ. Уйрăм йалсемпе аулсене пуштă çÿретме 50 автомашинă уйăрса панă.

●● Ока шывĕ çинче пăрахутсем çÿреме пуçланă. Рйазанйрен тăвала малтанхи букçирлă пăрахут тухнă.

(ТАСС).

„КУЗНЕЦКСТРОЙ" ВЛАДИВОСТОКА КИЛМЕ ТУХНĂ

ВЛАДИВОСТОК, апрелĕн 8-мĕшĕ. Кăçалхи февралĕн 19-мĕшĕнче тайарсем турттаракан „Кузнецкстрой" йатлă совет пăрахучĕ çĕркăмрăкĕ тийеме Йапонин Хакодате портне кĕрсессĕн, Йапонин тинĕс полицийĕ пăрахута, унăн пĕтĕм командипе пассажирĕсене те, ним айăпсăрах тытса чарни çинчен пĕлтернĕччĕ. Пăрахут çинче 35 çынлă командă тата 37 çын пассажирсем пулнă.

Полици командăпа пассажирсенчен йапонĕцсен тинĕс çинчи вăрăхурахла ĕçĕсене тĕрĕсе кăларакан материалсем пăвăртса илесшĕн пулнă. Ку ĕç вĕсен тухман. Вара капитана Йапони шывĕсем çине саккунсăр кĕнĕ, тесе айăплама тытăннă. Мартăн 19-мĕшĕнче çак ĕçе Йапони сучĕ пăхса тухнă. Капитана айăплама нимĕнле сăлтавсем те пулман пирки, ăна пин çурă иен штраф тÿлетермеле пригăвăр йышăннă. Анчах пăрахута малала та тытса тăма кăтартусем пулнипе пулас, прокурор ĕçе тепĕр хут пăхса тухма окружной суда панă, суд апрелĕн 6-мĕшĕнче ку ĕçе пăхса тухса малтан йышăннă пригăвăра çирĕплетнĕ. Капитана ирĕке кăларнă хыççăн апрелĕн 7-мĕшĕнче „Кузнецкстрой" Владивостока килме тухнă. (ТАСС).

ОТЧОТПА СУЙЛАВ ПУХĂВĔСЕМ

(МУСКАВ)

Апрелĕн 8-мĕшĕнче Мускаври 18 предприйатири парторганизацисенче отчотпа суйлав пухăвĕсем пуçланнă.

Пухусем политикă тĕлĕшпе çÿлĕ иртеççĕ, коммунистсем пухусенче пит активлă.

Владимир Илйич йачĕпе тăракан савăтри парторганизацин пухăвне коммунистсенчен 92 проценчĕ пынă. Партком отчотне туса пĕтернĕ тĕле прение тухса калама 21 çын çырăннă.

Тухса каланисем партком ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критикленĕ. Партком парти кандитачĕсемпе тата сочувствуйушчисемпе çителĕксĕр ĕçлени çине кăтартса панă. Парторганизацире 5 çул хушши тата ытларах та кандидатра тăракансем сахал мар.

Прение—парторганизаци йышăннă решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесси йанах тăрать, агитатăрсене çителĕксĕр йертсе пынă, тесе уйрăмах хыттăн палăртнă.

Отчотпа суйлав пухăвĕсем апрелĕн 9-мĕшĕнче малала ĕçленĕ.

(ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ
Повăр республикă çарĕнчи бойецсем валли апат хатĕрлет.
(Сойузфото).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăç фронтĕнче Лерида хулине туртса илнĕ хыççăн пăлхавçăсемпе интервентсем хăйсен тĕп вăйĕсене Тремп (Леридăран çурçĕрелĕ) тата Тортосу (Леридăран кăнтăрала) хулисене туртса илме йанă. Треми хулинче Борçелонăна електричествă вăйĕ парса тăракан гидростанцисем пур. Апрелĕн 7-мĕшĕнче республикă çарĕсем Тремп хулине пырса кĕмели çĕрти позицисене йышăннă.

Италин Ебро йатлă йухан шывран кăнтăр йенчи районра çапăçакан çарĕсем Тортосу çине (Вăтаçĕр тинĕс çыранĕнче) наступлени тăваççĕ. Пăлхавçăсен артиллерийĕ вăйлă перет пулин те, республиканĕцсем хăйсен позицисене сыхлаççĕ.

Центрти фронтра Гвадалахара районĕнче республиканĕцсем çак йулашки икĕ кун хушшинче йышăннă позицисене çирĕплетеççĕ.

(ТАСС).

Испани республикĕне пĕр шухăшлисен йухăмĕ

Англи

Кăнтăр Уелсри горнаксен федерацийĕн Кардифе хулинче пулнă конференцийĕ республикăлă Испанине Англирен хĕçпăшалсемпе вăрçă хатĕрĕсене илсе кайма чарнине пăрахăçа кăларма Англи правителствинчен ыйтса резолюци йышăннă.

Тред-йунионсен (професçилĕ сойузсен) генералнай совечĕн делегацийĕ Англин йут çĕршыв министрĕ Галифакс патĕнче пулнă. Делегаци республикăлă Испанине хĕçпăшалсем илсе кайма чарнине пăрахăçа кăларма ыйтнă.

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсем

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче Испани республикĕпе пĕр шухăшлисен массăлă йухăме вăйлансах пырать.

Писатĕлсен професçилĕ сойузĕн, интеллигенцин тата ытти представителĕсен паллă деятĕлĕсем—92 çын Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен президентĕнчен Рузвелтран республикăлă Испанине хĕçпăшалсем илсе кайма чарнине пăрахăçа кăларма ыйтнă.

Америкăри обшчественнăçăн паллă представителĕсем çакăн пек ыйтни тата ытти чылай зайавленисем Америкă халăхĕн йышлă масси республикăлă Испанине кăмăллани, фашистсен тискерлĕхне тарăхасси ÿссе пынине кăтартса параççĕ.

Америкă правителствин руководителĕсем Испанине хĕçпăшалсем илсе кайма чарнине хирĕç пиншер çырусемпе телеграммăсем илеççĕ.

Çак йулашки ернесенче нумай çĕрте массăлă митингсем, çавăн пекех Нйу-Йоркра 17 пин çынлă митинг пулса иртнĕ.

(ТАСС).

Агрессăрсем Мадрид патне çитес умĕн.

Сайфулин ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Китайри вăрçă

Тайерчжуан районĕнче (Шандун провинцин кăнтăр йенчи пайĕ) çĕмĕрсе тăкнă йапонĕцсен икĕ дивизин йулашкийĕсене Китай çарĕсем хупăрласа илсе, пĕтерсе тăкнă. Йулашки çапăçура Йапони салтакĕсене 5 пин çынран сахал мар вĕлернĕ. Шандун провинцин çурçĕр йенчи пайĕнче, Цзинанйрен (Шандун столици) Çурçĕр хĕвеланăçнеле 45 километртра, Китай çарĕсем Йунчена тытса илнĕ.

Центрти Китайри хайар çапăçусем Ханчжоу районĕнче пыраççĕ. Кунта Китай çарĕсем икĕ йала йышăнса илнĕ. Вăл йалсемшĕн çапăçнă чухне йапонĕцсен пысăк сухату пулнă—вилсе тата аманса 2.300 çын пĕтнĕ.

(ТАСС).

Франци правителстви отставкăна тухнă

Парижрен пĕлтернĕ тăрăх, Блюм правителстви отставкăна тухнă.

(ТАСС).

Çурçĕр Анхуейри партизансем

Анхуей провинцин (Центрти Китай) çурçĕр йенчи пайĕнчи пысăк йышлă партизан отрйачĕсем хушшинче Ченхуа—тинăн (вăл утмăл çултан иртнĕ) тата 30 çулхи хĕрарăмăн патриоткăн Ван Санăн отрйачĕ пит паллă. Вĕсен отрйачĕсенче бойецсем вунă пин ытла.

Анхуейри партизансен мĕн пур отрйачĕсене Китай çарĕсен штабĕ йертсе пырать.

(ТАСС).

Германи шпионажĕ Америкăра

Америкăри хаçатсем полици Германин виçĕ шпионне арĕслени çинчен пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Вĕсенчен иккĕшĕ—Германи фашисăмĕн Нйу-Йоркри организацин членĕсем. Арĕсленĕ шпионсем Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче нумай пулмасть тупса палăртнă Германи шпионĕсен центрĕпе çыхăннă пулнă.

Ĕçе тĕрĕслесе тухсан Германи шпионĕсен аллинче Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен тинĕс çинчи оборонă планĕсем пуррине палăртса çирĕплетнĕ. Официаллă айăпланинче çапла çырнă: „арĕсленисем шпионла ĕç туса пурăннă, тата йут çĕршыв государствин агенчĕсене Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсен оборонă планĕсем çинчен информаци парса тăнă"—тенĕ.

(ТАСС).

Парти пурнăçĕ

Партин йертсе пыракан органĕсене суйлама хатĕрленеççĕ

Шупашкарти парторганизацисенче

Шупашкарта пур организацисенче те партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен парти Тĕпкомĕ йышăннă постановленине сӳтсе-йаваççĕ, тата парти Тĕпкомĕ йышăннă постановленийе парти шкулĕсемпе кружокĕсенче вĕренеççĕ.

Стройтрест çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинчи коммуниссем партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен парти Тĕпкомĕн постановленине сӳтсе-йавнă. Иртнĕ суйлавра коммуниссем панă сĕнӳсене парти комитечĕ мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тухма йышăннă. Çавăн пекех хула комитечĕ йышăннă постановленисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслеме тытăннă.

Çыхăну управлени çумĕнчи парторганизаци сочувствуйушчисене те партин йертсе пыракан органĕсене суйламали инструкцине ăнлантарса панă. Кунта партин йертсе пыракан органĕсене суйлама хатĕрленнĕ май, почтăпа телеграф ĕçĕсене тĕрĕслесе, питĕ пысăк çитменлĕхсене палăртнă. Почтăра укçа куçарни çинчен пĕлтерекен переводсем 100 перевод ытла çулталăк хушши выртаççĕ. Ку переводсене кирлĕ çынсене вăхăтра пĕлтерме [illegible]ламаççĕ. Хаçат-журналсене вăхăтра йамасăр тытса тăраççĕ. Телеграммăсене, çырусене вăхăтра памаççĕ. Шупашкар çыннисем часчасах Шупашкарти çырусене Мускавран килекен çырусенчен кайран илеççĕ. Çыхăну управленинче кун пек пысăк çитменлĕхсене тĕмĕн чухлех кăтартма пулать.

Педагогика институчĕ çумĕнчи парторганизацинче апрелĕн 1-мĕшĕнче партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен сӳтсе-йавнă. Партин йертсе пыракан органĕсене тата РСФСР Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ май парти пухăвĕнче политикăла агитаци ĕçĕсем çинчен сӳтсе-йавнă. Уйрăм агитатăрсен ĕçĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн, чылай çитменлĕхсем палăртнă, уйрăмах политикăла агитаци пахалăхĕ çителĕксĕр. Ку çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме хушнă. Кунсăр пуçне тата пропагандиссене пухса семинар ирtернĕ. Семинарта партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен парти Тĕпкомĕ йышăннă постановленипе инструкцийе ăнлантарса панă. Халĕ кружоксенче партин йерте пыракан органĕсене суйламали инструкцийе вĕренеççĕ.

Массăлă заочнă вĕренӳ институчĕн уйрăмĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен апрелĕн 4-мĕшĕнче сӳтсе-йавнă. Пухура тухса калаçакан коммуниссем парторганизацин тата институтăн çитменлĕхĕсене палăртнă. Кунти парторганизаци партилĕ-политикăлă ĕçе производства ĕçĕпе çыхăнтарса пымасть. Çавăнпа та ĕнтĕ институт вĕренӳ планне вăхăтра пурнăçласа пыраймасть. Хаљхи вăхăтра колхоз активĕн курсĕнче вĕренекенсем программăна вĕренсе пĕтермеле пулнă, анчах пайанхи куна республикăра пĕтĕмпе те 2 группă çеç вĕрентсе кăларнă. Мĕншĕн тесен, конференцисем план тăрăх пулса пымаççĕ. ИМЗО уйрăмĕн руководителĕсем заочнă вĕренĕве çителĕксĕр йертсе пыраççĕ. Институт директорĕпе вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ конференцисенче пулмаççĕ. Кунта парти дисциплинине те çителĕклĕ лартман. Институтра ĕçлекен преподавателсене суйлав участокĕнче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене ăнлантарма хушнă. Вĕсем ку ĕçе тытăнман та. Нумай пулмасть Магуçкин преподавател хăйĕн портфелне канцелярине пăрахса хăварнă. Портфелре парти билечĕ пулнă.

Коммуниссен пухăвĕ ку çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме, кашни коммунис парти поручениесене мĕнле пурнăçланине тĕрĕслесе тухма хушнă.

Çутĕç халăх комиссариачĕ çумĕнчи парторганизацинче партин Тĕп Комитечĕ йышăннă постановленине тĕрĕс ăнланман. Кунта партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен коммуниссен пухăвĕнче сӳтсе-йавнă, анчах нимĕнле решени те йышăнман. Ку парторганизаци начар ĕçлени çинчен хаçатра та çырса кăларнă. Анчах вĕсем хăйсен çитменлĕхĕсене пĕтерме тăрăшмаççĕ. Кунти коммуниссенчен: „Есĕр мĕн вĕренетĕр?“ — тесе ыйтсан: „Ленинисăма вĕренетпĕр“, тесе ответлеççĕ. Анчах мĕнле вĕренеççĕ ха вĕсем? Ленинисăма вĕренекен кружок чăнах та пур кунта. Кружока йертсе пыма Çутĕç халăх комиссарне Осипăв йулташа хушнă. Кружок ĕçлемест. Хаљхи вăхăтра пĕр заңати те пулман. Ытти коммуниссем те кунта парти поручениесене вăхăтра, кирлĕ пек пурнăçласа пымаççĕ. Политикăлă агитаци ĕçне начар лартнă. Парторганизаци ӳсмест. 1937—38 çулсенче кунта пĕр çынна та парти ретне илмен. Кунта хăшпĕрисем 1925 çултанпа парти кандидатĕнче тăраççĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Искусства управленинчи парторганизацинче партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен парти Тĕпкомĕн постановленине сӳтсе-йавнă, пухура лайăх решени йышăннă. Анчах Иванов парторг партилĕ-политикăла ĕçе вăйлатассишĕн тăрăшмасть. Вăл парторганизаци умĕнче тăракан йăвăрлăхсенчен хăраса ӳкнĕ, çăмăл ĕç шырать. „Парторганизаци çĕнĕ, ĕç нумай, ыттисем ĕçлесе пăхчăр“, тет вăл. Паллах, Иванов парторг пек хăравçăсем парторганизацисен умĕнче тăракан политикăлă-хуçалăхлă задачăсене ăнăçлăн пурнăçлассишĕн кĕрешессине шанма çук.

Садвинтрестри парторганизацинче

Апрелĕн 5-мĕшĕнче Садвинтрестри коммуниссен пухăвĕ пулса иртнĕ. Пуху партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене иртересси çинчен Парти Тĕп Комитечĕ йышăннă постановленийе сӳтсе-йавнă. Пухура тухса калаçакан коммуниссем парти вĕрентĕвĕн пахалăхне лайăхлатма сĕнӳсем панă.

Садвинтрест çумĕнчи парторганизаци партилĕ-политикăлă ĕçсене хуçалăх ыйтăвĕсемпе çыхăнтарса пырать. Совхоз хаљхи вăхăтра çуракине хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăхсене пĕрремĕшпе иккĕмĕш кондицине çитичен суртласа тасатнă. Анчах совхозра стахановла йухăм çителĕксĕр пырать. Рабочисем пурте ăмăртса ĕçлемеççĕ. Çавăнпа та пуху парти органĕсен суйлавĕсене иртернĕ май, стахановла йухăмпа социалисăмла ăмăртăва кирлĕ пек организацилеме хушрĕ.

Коммуниссем парти организацине ӳстересси çинчен те каларĕç. Кăçал 3 çынна парти кандидатне илнĕ. Халĕ партине кĕрес текенсем татах пур. Анчах рекомендацисем пирки чăрмавсем чылай. Парторганизацинче рекомендаци пама пултаракан коммуниссем сахал, ытти парторганизацисенче тăракан коммуниссем пĕлсе тăракан рабочисенех рекомендаци памасăр тăраççĕ. („Чăваш Коммунĕн“ корр.).

40 çын вĕренеççĕ

ШАХАСАН РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсене иртерме хатĕрленнĕ май, парти райкомĕ парткабинет çумĕнче агитатăрсене вĕрентсе хатĕрлекен курс организацилерĕ. Унта районти организацисемпе колхозсенчен килнĕ агитатăрсем 40 çын вĕренеççĕ.

В. Ч.

Ĕçлемен пуçламĕш организаци

Шупашкар районĕнчи машинă-трактăр станцийĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацинче тăватă парти членĕ тата пĕр кандидат шутланать. Парторг пулса Шчеголев йулташ ĕçлет. Вăл парторгра чылай вăхăт хушши ĕçлет ĕнтĕ, унăн ĕçри опыт пысăк темелле. Анчах парторганизаци ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Унăн ĕç планĕ çук. Пухусем вăхăтра пулса пымаççĕ, 1938 çул пуçланнăранпа виçĕ пуху çеç пулнă.

МТС-ра активиссем сахал мар. Анчах парторганизаци вĕсемпе ĕçлесе пымасть. Политикăла-массăлă ĕçе çителĕксĕр туса пырать. 1938 çулта парти ретне пĕр çынна та илмен.

Çураки çывхарса килет, МТС умĕнче чи ответлă ĕç тăрать. Анчах кунта çуракине тухма хатĕр мар. Трактăрсем, тырă акмали машинсем, плугсем тата икĕ грузовик йусавсăр лараççĕ. Парторганизаци ку йенпе ответлăха туймасть.

Парти организацин асăннă çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерессишĕн çине тăрсах ĕçлемелле.

Галинăв.
Йе. Васильев.

Сочувствуйушчисен йышĕ ӳсет

СЕНТЕРВАРРИ. Йалхуçалăх техникумĕнчи парторганизацинче сочувствуйушчине илес ĕç лайăхланса пырать. Сочувствуйушчине кĕме техникумри лайăх ĕçлекен, шанчăклă служащисем заявлени параççĕ. Техникумра çак кунсенче 6 çынна сочувствуйушчисен ретне илнĕ.

Сочувствуйушчисен ретне илнисенчен: Сергейĕвă Райса—техникумра геодези кабинечĕн пуçлăхĕ, А. Йадровă техникумра библиотекăр пулса ĕçлет, Савельĕв Васильий—виçĕ çул хушши ĕнтĕ техникумăн пахчинче пахча-çимĕçсем лартса тăвас тĕлĕшпе ĕçлет.

Техникумри парторганизаци çĕнĕрен илнĕ сочувствуйушчисен политикăла пĕлӳне хăпартас шутпа икĕ заңати туса ирtернĕ, малашне те вĕрентсе пыма коммуниссене уйăрса хунă.

Гр. Смирнов.

Агитатăрсен курсĕ

ТĂВАЙ. Мартăн 20-мĕшпе 30-мĕш хушшинче ПСК(б) Парти райкомĕ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕрентекен агитатăрсен курсне ирtерчĕ. Курра комсоргсемпе вулав çуртĕсен пуçлăхĕсем пĕтĕмпе 27 çын пулчĕç, пурте вĕренсе тухрĕç.

Вĕренсе тухнисем хаљхи вăхăтра пурте йалсенче агитатăрсем пулса ĕçлеççĕ.

В. Илйин.

Политикăлă-массăлă ĕçе туса пыракансен канашлăвĕ

ЕЛĔК. Апрелĕн пуçламĕшĕнче районри вулав çурт пуçлăхĕсен, стена хаçат редактăрĕсен, кино работникĕсен, письмоносецсен, агитатăрсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленесси тата çуракине пур йенчен те хатĕрленсе тухса, ăна ăнăçлăн, кĕске вăхăтра иртересси çинчен сӳтсе-йаврĕç.

Канашлура чылай йулташсем тухса каларĕç. Вĕсем халăх хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе туса пырас ĕçри лайăх тĕслĕхсене тата çитменлĕхсене палăртрĕç.

Районра Мăн Вылă йалсоветĕнчи вулав çурчĕ малта тăрать. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ И. Табов йулташ ĕçе тăрăшса, лайăх туса пырать. Кунта РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренме 18 кружок организациленĕ. Кружоксен заңатийĕсем йĕрклĕ, план тăрăх пулса иртеççĕ. Кунсăр пуçне РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене ĕççыннисене тĕплĕн ăнлантарса парас тĕлĕшпе пухусенче докладсем туса параççĕ. Ку вăхăта çитиччен колхозниксен пĕрлешӳлĕ пухăвĕсенче 4 хутчен, бригадă пухăвĕсенче 7 хутчен докладсем туса панă. Агитатăрсенчен Ванин, Парамонăв, Казыкăвă йулташсем лайăх ĕçлесе пыраççĕ.

Йалсоветĕнче пурĕ 15 стена хаçачĕ тухать. Уйрăмăнах Мăн Вылă колхозĕнчи „Хĕрлĕ шуçăм“ йатлă стена хаçачĕ йĕркелĕ тухса тăрать.

Çураки вăхăтĕнче куљтмассăлă ĕçсене туса пыма план пур. Хире радио илсе тухаççĕ. Хаçатсем вуласа пама 43 çын уйăрса хунă т. ыт. те.

Анчах районри ытти вулав çурчĕсенче ĕç начар пырать-ха. Йуптапари вулав çуртĕнче нимĕнле ĕç те çук. Чăваш сурăмĕнче, Елĕкре, Панклире „вулав çурчĕсем“ валли çуртсем çук!?

Райсутĕç пайĕ вулав çурт пуçлăхĕсене ĕçре çителĕклĕ йертсе пымасть. Семинарсем, канашлусем сайра хутра кăна пулкаласа иртеççĕ.

Районра колхоз клубĕсем 14 ытла, анчах çав клубсем нимĕн те тумаççĕ.

Кино кăтартас ĕç те çителĕксĕр. Районри кинобазă начар ĕçленипе чылай колхозсенче кино кураймаççĕ. Район центрĕнче те саслă кино картинăсене начар кăтартаççĕ.

Район центрĕнчи куљтурă çурчĕ çителĕксĕр ĕçлет. Кунти кружоксем нимĕн те тумаççĕ.

Елĕк районĕнчи нумай колхозсенче РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленесси, суйлав саккунĕсене вĕренесси çителĕксĕр пулса пырать. Çак çитменлĕхсене пĕтерсе, халăх хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе тивĕçлипе организацилемелле. РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне ăнăçлăн хатĕрленессишĕн, çуракине кĕске вăхăтра пысăк пахалăхпа иртерессишĕн кĕрешмелле.

Ф. Филиппăв.

Трахомран хăвăртрах тасалар

Елĕкхи тĕттĕм йалсенче трахомран сывалас, трахома пĕтерес тенĕ сăмахсем пулман. Усал та инкеклĕ чир ун чух вĕçĕмсĕр сарăлса пынă. Нумайĕшĕ пĕтĕм кил-йышĕпе трахомлă пулнă. Ача-пăчасем уйрăмах пысăк асап курнă. Тĕттĕм, таса мар пӳртре ăçапа çуралнă-çуралман трахом чирĕ йернĕ. Пурин те куçĕсем пӳрленсе çӳренĕ. Куç пӳрленнине вăл вăхăтра чир вырăннĕ шутламан. Ача амăшĕ хăйĕн пӳрлĕ куçне çара алăпа йе тутăр вĕçĕпе шăлса илнĕ, унтан çав алăпах çав тутăр вĕçĕпех ачин куçне те шăлнă. Килте пит çумали, супăнь, уйрăм алшăлли тытас йĕрке пулман. Трахомлă куç темиçе çултан аманса çитсе ырата пуçласан тин,—куç пăсăлчĕ, тенĕ. Анчах вăра кун пек куçа тӳрлетме май килмен. Ватла киле трахомлă çын суккăр пулса ларнă.

Елĕкхипе танлаштарсан пирĕн хаљхи йалсем пачах урăхла. Трахомпа чирлекенсем çулран-çул сахалланса пыраççĕ. Пирĕн колхозниксем хаљ пуйăп та куљтурăлă пурăнма пуçларĕç. Колхозник пӳртне тасалăх кĕчĕ. Санитарипе гигийенă ĕçĕ çулран-çул сарăлса пырать.

Хаљхи вăхăтра Сĕнтĕрвăрри районĕнчи йалсенче 45 трахпункт ĕçлет. Вĕсенчен Хуракассинчи, Çич Пӳртри, Урхас Кушкăри трахпунктсене йатарласа шкулсем çумĕнче уçнă.

1935 çулта пирĕн районра трахомлисем 7.864 çын пулнă пулсан, пайанхи кун тĕлне вĕсенчен çурри ытла трахомран йалтах сывалса çитнĕ. Вăл çынсем трахом чирĕ мĕнле сийенлине лайăх ăнланса илнĕ. Çавăнпа вĕсем çине тăрсах трахпункта çӳренĕ, емелленĕ хăйсен куçĕсене. Анчах çав хушăрах трахом инкек-синкекне ăнланса илменнисем, çав усал чиртен пайан кунччен те хăпайман пурăнаççĕ. Вĕсем трахпункта йе пачах çӳремеççĕ, йе хутран-ситрен кăна çӳрекелеççĕ. Кун пек çынсем пĕтĕм йалйыш умĕнче айăплă темелле. Вĕсем пирки колхоз пухăвĕсенче сӳтсе-йавмала, пĕтĕм колхоз йышĕпе хытăн асăрхаттармала, вĕсене трахпункта çӳреттермелле.

Пирĕн шутпа колхозра кашни бригадир хăй бригадинче кам трахомлă, кам трахомран сывалнă, кам емелленме йĕркеллĕн çӳрет, кам çӳремест, пурне те лайăх пĕлсе тăмалла. Бригадăри колхозниксемпе колхозницăсене пухса, вĕсен умне трахомран сывалас ĕç пирки уйрăм ыйту лартмала. Çак пухусенче халăха ăнлантарса пама врачсене чĕнмелле, йалти трахомработникĕн ĕçĕ кулен халăх хушшинче пулса пымалла.

Хăшпĕр трахомлă çын трахом сийенлĕхĕ çинчен лайăх ăнланать пулин те, куçне йури емеллемесĕр пурăнать. Çавнашкал хăй куçне йури емеллемесĕр пурăнса, трахом чирĕне ыттисене йĕртекен çынна йалти обшествăлă суда та пама йурать.

Сăмахран, пирĕн Сĕнтĕрвăрри районĕнче унашкал кутăнлаканнисем çаксем пулаççĕ. Аслă Астакассинче—Колцов Василий, Васильев Василий; Хуракассинче—Прохорăв Иван, Ларионăв Петр.

Вĕсем чипер çамрăк çынсемех, пайан ыран Хĕрлĕ Çара каймалаксерсем. Вĕсем трахпункта та çӳремеççĕ, пуљницăна чĕнсен те—пымаççĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнче трахомлисем чылайăх йулнă-ха. Вырăнти трахработниксен, врачсен инкеклĕ трахом чирне пĕтерессишĕн çине тăрсах ĕçлемелле.

Врач Й. Макарăв.

Йапонин Китайри агреççийĕ

(Варçăн тăхăр уйăхри итогĕсем)

Йапони агрессăрĕсем пĕлтермесĕрех пуçланă тата халичченех „инцидент“ тесе чĕнекен Китайри вăрçă тăхăр уйăх пырать ĕнтĕ.

Çак вăрçăра,—Йапонин çар çыннисем ăна хăйĕн йачĕпе чĕнессинчен çине тăрсах пăрăнаççĕ,— икĕ йенĕн те калама çук нумай çынсем вилчĕç тата аманчĕç. Вăрçăн малтанхи çурçулĕнче кăна, çак çулти йанварĕн 1-мĕш тĕлне Йапони çарĕнче 200 пин çын ытла вилнĕ тата аманнă,—вăл Йапонин вунă дивизийĕпе танлашать.

Вăрçă ĕçĕсем Çурçĕр Китайăн пилĕк провинцинче тата унăн центрти пайĕн виçĕ провинцинче пыраççĕ. Вăрçăпа пысăк территори сийен курнă. Вуншар пин мирлĕ китайĕçсем пурăнмали çуртсенчен тарса йулнă, вĕсем халĕ тăван йалсемпе хуласенчен айакра хăйсене пурăнма кĕтессем шыраççĕ. Китайрин авалхи хуласене, Китайăн економикăпа куљтурă центрĕсене Бейпина, Тйанцзине, Шанхайа, Нанкина аркатса тата çаратса пĕтернĕ.

Йапони Китайăн çурçĕрти провинцисене йарса илме хăтланать, вăл провинцисенче фуда тата сĕркăмрăк запасĕсем нумай, унтах сĕрмамăк тата йалхуçалăхĕ тăвакан ытти чĕртаварсем пур. 70 мĕлйун халăх пурăнакан Çурçĕр Китай Йапонийе унăн промышленнăç продукцисене илекен пысăк рынăк пулма пултарнипе питĕ илĕртет. Çурçĕр Китай Йапони империалисăмне „пысăк вăрçă“ валли крепăç тума та кирлĕ.

Йапони империалисăмĕ Китай правителстви тата Китай генералĕсен çарĕсем вăйлăн хирĕç тăнине кĕтсе илме хăнăхман. Йапонири пуç пулса тăракан блок халĕ те Йапонийе вăрçăна хăвăрт пĕтерме май пулĕ тата материке çине 4—5 дивизи йанипе те çитĕ, тесе шутланă. Анчах чăнлăх урăхла пулса тăчĕ. Вăрçă ĕнтĕ тăхăр уйăх тăсăлать, çапах та вăл çывăх кунсенчех пĕтесси курăнмастха. Вăрçă ĕçĕсен фрончĕ икĕ пин çурă километр тăршшĕ тăсăлса кайрĕ. Йапони мирлĕ вăхăтри çара иккĕ çурă хут ӳстерчĕ, пăшал айне запасран мĕлйун ытла çынсене тăратрĕ.

Хаљхи пек йăвăр вăрçă хăй туса иртернĕ мĕн пур вăрçăсем хушшинче (чи пысăккинĕ—1904—1905 çулсенче Росçийăпа вăрçнине кĕртсен те) пĕрре те Йапони халиччен курман. Вăрçă Йапони економики çине хытăн пырса çапать, вăл економикă вăрçăччен те уйрăмăнах çирĕп пулман. Çынсене массăлăн çара илсе кайни йалхуçалăхне тата промышленнăçа ĕç аллисемсĕр тăратса хăварать. Тавар хакĕсем ӳсеççĕ, ĕçукçи чакса пырать. Вăрçă халех те ĕнтĕ йапонĕçсен çичĕ мĕлйард иенне çисе йачĕ, вăл Йапонин çулталăкри бюджетĕнчен виçĕ хут ытларах пулать.

Китай çарĕн, хисеп йенчен пысăкскерĕн, анчах техникăпа аварланас тĕлĕшпе Йапони çарĕнчен чылай кайра тăраканскерĕн, вăрçăна ирĕксĕрех йăвăр условисенче туса пыма лекет. Çапла пулин те вăл вăрçăра Йапонин генералнăй штабĕ шутланинчен пултарулăрах та вăйлăрах пулса тăчĕ.

Паллă, Йапони захватчикĕсем вăрçă ĕçĕсене икĕ фронтра — Çурçĕр Китайра тата Шанхай çывăхĕнче пуçларĕç. Икĕ фронтĕнче те оккупантсем малтан чылай пысăккăн курăнакан ӳсĕмсем турĕç. Анчах пысăккăн курăнакан ӳсĕмсем кăна, мĕншĕн тесен, Çурçĕр Китайăн чылай пайне йарса илни те, Шанхайа тата Нанкина—Китай столицине — йарса илни те йапонĕçсене кĕтнĕ çĕнтерĕве параймарĕç. Хăйĕн тăван çĕршывне тата унăн никама пăхăнманлăхне сыхлама, Йапони агрессăрне хирĕç Китайăн пĕтĕм халăхĕ çĕкленчĕ, нихăçан та пĕтме пултарман вăйпа паттăрлăх пуррине кăтартрĕ.

Китайри халăх çарĕ захватчиксемпе кĕрешессинче чăннипех те геройлăх кăтартать. Китай салтакĕсем час-часах винтовкăсемпе тата пулеметсемпе кăна Йапони самолечĕсене, танкĕсене тата йăвăр артиллерине хирĕç кĕрешеççĕ.

Йапонĕçсем Китайра пысăккăн тăсăлса выртакан территорине йарса илнĕ, анчах, чăннипе илсен, агрессăрсем хăйсем йарса илнĕ районсенче хуçа пулса тăраймаççĕ. Йапони çарĕсен чăсĕсем пысăк крайра уйрăм утравсем пек сапаланса пĕтнĕ, унта пурăнакан халăх захватчиксене питĕ те кураймасть. Йарса илнĕ обласçсенчи Йапони гарнизонĕсем хĕссе лартнă пек пурăнаççĕ; „çĕнтерӳçĕсен“ ирĕксĕрех хуласем хыçĕнче партизансем хăйулăн тапăннинчен сыхланса лармала килет. Чăннипе илсен, захватчиксем йарса илнĕ районсенче Китай халăхĕн массисемех хуçа пулса тăраççĕ, вĕсем тусем çине кайса, унта партизансен отрйачĕсене йĕркелеççĕ. Йапонĕçсем укçа парса илнĕ сутăнчăксенчен тунă вырăнти пуканеле „правителствăсене“ вĕсем пăхăнма шутламаççĕ.

Нанкина йарса илни Йапонин çар çыннисене вĕсем кĕтнĕ çĕнтерĕве памарĕ. Вара агрессăрсем хăйсен сассине улăштарчĕç те „вăрçăн иккĕмĕш тапхăрне“ кĕни çинчен пĕлтерчĕç, вăл „тапхăр“ нумай вăй хума тата малтанхинчен чылай нумай çухатусем тума хушать.

Чакса пынин тапхăрĕ Китай çарĕшĕн ахаљ иртсе каймарĕ. Правителствă çĕршыв оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе, çарсене вăйлатас, çарăн центрти тата вырăнти аппарачĕсене реорганизацилес тĕлĕшпе мерăсем йышăнчĕ. Çаксем пурте Китай çарне фронтсенчи ĕçсене активлатма май пачĕç.

Пулашки уйăхсенче фронтăн икĕ тĕп участкисенче хаяр çапăçусем пулса иртнĕ: Шаңдуң провинцинче тата Шанси провинцинче. Йапонĕçсем кăнтăрала Таңузин—Пукоу чукун çул тăрăх наступлени туса пырас тесе, Шаңсине çĕмĕрсе кĕчĕç. Кунта наступлени туса пырасси Йапони çарĕсем Нанкин йенчен çав чукунçул тăрăхах çурçĕрелле куçса пырассипе пĕрле пулмала пулнă. Икĕ йенчен тапăнса пырса йапонĕçсем Сӳйчжоу хулине, темиçе чукунçула пĕрлештерсе тăраканскере, йарса илме тата çапла майпа Çурçĕр Китайри тата Шанхайри фронтсене пĕтĕçтерме шут тытнă.

Плана лайăх туса хатĕрленĕ пулнă, йапонĕçсем „пĕчĕк ĕçсене“ кăна —Китай çарĕн нумай ӳснĕ вăйне кăна шута илеймен.

Çак çулăн йанвар—феврал уйăхĕсенче Китай çарĕсем йапонĕçсен наступленине чарса лартрĕç те хăйсем контрнаступленине куçрĕç. Йапонĕçсен пĕтĕм техники çине пăхмасăр, Китай çарĕсем вĕсене питех те туйăнмала çапрĕç тата халĕ те çапаççĕ. Йанварĕнче йапонĕçсен ирĕксĕрех оборонăна куçмала, окопсем алтмала тата вĕсен тавра пралуксем карса тухмала пулчĕ. Пур майсемпе те малала кайма хăтланчĕç пулин те, йапонĕçсем икĕ уйăх хушши пĕр вырăнтах тăчĕç.

Март уйăхĕн варринеле Йапони командованийĕ Шаңдуң çине тапăнассине çĕнĕ çарсем йарса вăйлатрĕ те наступлени тума тытăнчĕ. Хăйсен тĕп вăйне йапонĕçсем кăнтăрала чукунçул тăрăх йачĕç. Малтанхи кунсенче вĕсем кăштах малала кайма ĕлкĕрчĕç. Анчах та, Китай командованийĕ йапонĕçсем çине хĕвелтухăç йенчи флангран наступлени тăвассине организацилесе, противника ирĕксĕрех кайала чакмала турĕ. Йапонĕçсен тупăсем, танксем, пăрахса хăварса, нумай хăйсен çыннисене вĕлерсе тата амантса чакмала пулчĕ.

Февраљпе мартри фронтăн чи активлăрах тепĕр участки — Шаңси провинцийĕ. Кунта йапонĕçсем кăнтăрала кĕрсе кайма, çапла майпа, пĕрремĕшĕнчен, Китай çарне контрнаступлени тумали майсемсĕр тăратса хăварма, тата, иккĕмĕшĕнчен, Хуанхе шывĕ урлă каçса, шыв тăрăх хĕвелтухăçĕнчен хĕвеланăçнеле кайакан Лунхай чукунçулне йарса илме шутларĕç. Йапонĕçсем пĕр вăхăтрах виçĕ йенчен наступлени тума пуçларĕç, çав 3 йенчен тăвакан наступлени провинцин кăнтăр хĕвеланăç кĕтесĕнче Пучжоу хули патĕнче пĕрлешмелле. Çак операцине туса иртерме йапонĕçсем пилĕк дивизине хушрĕç. Китайĕçсем вĕсене хирĕç Шаңси провинцинчи çарăн начар хĕçпăшалланнă чăсĕсене тăратма пултарнă.

Пачах та артиллерисĕр çапăçакан Китай чăсĕсем противнике палăрмалах вăйлă отпор пама пултараймарĕç. Март уйăхĕн варринче Йапони чăсĕсем Хуанхе шывĕ патне çитсе тухрĕç, те ун урлă каçма хăтланчĕç.

Шаңсире йапонĕçсем наступлени тума пуçланă хыççăн, Китай командованийĕ хăрушă участкăна çĕнĕ çарсем куçарса йачĕ. Март уйăхĕн варрине Китайăн çĕнĕ чăсĕсем фронтра пухăнма тытăнчĕç.

Шаңсин кăнтăр йеннеле тапăнса пыракан йапонĕçсем, мĕн пур хушăна çавăрса илме пултарайман пирки, пысăк çулсемпе кăна малала пычĕç. Китайĕçсем хăвăртрах противникăн вăйсăр вырăнне тупса илчĕç те унпа питех те пахан усă курчĕç. Кайала чакса пырас вырăнне, Китай чăсĕсем йапонĕçсен тылне кĕрсе, унтан пĕрмайах противник çине тапăнса пычĕç. Йапонин тĕрлĕ çулсем çинче сапаланса пĕтнĕ чăсĕсем пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайрĕç; кĕçех йапонĕçсем умне вĕсен чăсĕсене кашнинех уйрăммăн пĕтерсе хурас хăрушлăх сиксе тухрĕ. Партизансем тата Китайăн тылра йулнă отрйачĕсем çапни пирки, çавăн пекех Китайăн фронта пухăннă çĕнĕ вăйсем хĕссе пынă пирки, йапонĕçсем хăйсен чăсĕсене кайала туртса илме тытăнчĕç. Халĕ йапонĕçсем хăйсен çарĕсене пухаççĕ тата, Хуанхе шывĕнчен кайала кайса, вĕсене Таңзаң—Пучжоу чукун çулĕ тăрăх пĕтĕçтереççĕ.

Шаңсири çапăçусенче Китайăн 8-мĕш революциллĕ халăх çарĕ калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать, ăна Китайри паттăр хĕрлĕ çартан тунă. Вăрçă пуçлансанах йапонĕçсем наступлени тунă чухне, революциллĕ халăх çарĕ захватчиксене çирĕп отпор парса пычĕ. Йапонĕçсен тылне тăрса йулса, 8-мĕш революциллĕ халăх çарĕ хăйĕн тавра противник тылĕнче çапăçакан ытти чăсĕсене те организацилерĕ, халĕ ĕнтĕ вăл йапонĕçсене çапнă хыççăн çапса пырать.

8-мĕш çар,—ăна пĕтĕм Китай халăхĕ йуратать тата унпа мухтанать,—Йапони тылĕнчи партизанла вăрçăн çĕнĕ тактикине туса хатĕрлерĕ, ăна пурнăçа кĕртсе пырать. 8-мĕш çарăн хăвăрт та çăмăллăн çӳрекен отрйачĕсем, Йапони техникине пырса çитме йăвăр тусен районĕнче вырнаçса, Йапонин уйрăм чăсĕсем, штабĕсем, тылри учрежденисем çине кĕтмен çĕртен тапăнаççĕ. Йапони çарĕсене аркатаççĕ, вĕсене йĕркерен кăларса пăтратса йараççĕ тата нумай вăрçă хатĕрĕсем турта-турта илеççĕ.

8-мĕш çар командованийĕ нумай брошурăсем кăларчĕ, вĕсенче начар хĕçпăшалланнă вăйсемпе Йапонин вăйлăн хĕçпăшалланнă çарĕсене, вĕсен танкĕсене, йăвăр артиллерине тата авиацине хирĕç мĕнле кĕрешмели çинчен çырнă. 8-мĕш çар меслечĕсене Китай çарĕсенче вĕренеççĕ, халĕ ĕнтĕ вăл меслетсемпе Çурçĕр Китайри партизансем кăна мар, Шанхай фронтĕнче те усă кураççĕ. Сăмахран, Шанхайран хĕвеланăçнерех районра партизансен пысăк отрйачĕсем Йапонин чылай дивизийĕсене тĕп фронтран пăрса йанă, çав дивизисем пултарулă куçкаласа çӳрекен партизансен отрйачĕсене ăнăçусăр çĕмĕрсе тăкма хăтланаççĕ, анчах çĕмĕрсе тăкас вырăнне, хăйсем партизансен пуљи айне пыра-пыра кĕреççĕ.

Куратпăр ĕнтĕ, вăрçăн иккĕмĕш тапхăрĕ йапонĕçсемшĕн пĕрремĕш тапхăртан чылай ăнăçсăртарах пулчĕ. Вăрçă тăсăлса кайнă майĕпе йапонĕçсен фронтри лару-тăрăвĕ, агрессăрăн Йапонири хăйĕнчи лару-тăрăвĕ те çивĕчленсе пырать. Йапони правителстви пур çĕрте те çирĕп режим туса хунă. Чукунçулсем тăрăх çӳрессине чакарнă, автомобилсем валли горючи илме картăчкăсем тунă, тимĕрпе, хурçăпа, тĕслĕ металсемпе строителствăра тата йăлара контрољсăр усă курассине чарса лартнă.

Хуçалăхăн пур отраслисенче те йăварлăх ӳсет. Анчах хуçалăхра кăна мар. Йапонире анлăрах та анлăрах вăрçа хирĕçле шухăш-кăмăл сарăлса пырать. Вĕсемпе кĕрешес майпа полици пролетариатăн уççăн ĕçлекен организацисене хупать, массăлă арĕссем туса иртерет. Запасран чĕннисем Йапонирен фронта кайасшăн мар пулса хирĕç тăни темиçе те пулнă. Командованин чылай чăсĕсене, вĕсем çапăçма пултарайман пирки, фронтран Йапонине кайала илсе пыма лекнĕ.

Китай çарĕн вăйĕ кашни кунсеренех ӳсет,—ун хыçĕнче пĕтĕм Китай халăхĕ тăрать, ун çине пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем кăмăллăн пăхаççĕ.

Н. ЛАХАВ.

1938 çулхи çураки умĕн

ИКĔ РАЙОН ĂМĂРТĂВĔ

ИШЛЕЙ—ШУПАШКАР

Çакăн пек ĕçлени йурăхсăр

Васликассинчи „Хĕрлĕ Октябĕр" колхоз çуракине лайăх хатĕрленсе пырат, теççĕ Ишлей райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем. Анчах та чăннипе илсен, ĕç пĕтĕмпех урăхла тăрат кунта. Райçĕрпайĕнче ĕçлекенсем колхозсене сахал тухса кураççĕ, колхозсем мĕнле ĕçленине колхозсенчен тăратакан сведĕнисем тăрăх хак параççĕ. Çакна пула колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç чăннипе мĕнле тăнине пĕлмеççĕ.

„Хĕрлĕ Октябĕр" колхоз 4 йала пĕрлештерсе тăрат. Ку колхозăн çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тунă ĕçĕсем те пысăк пулма кирлĕ. Çапах та, вăл вăйлă тырпул туса илессишĕн çине тăрса кĕрешме тытăнман. Колхоз правленинче ĕçлекенсем: „епĕр вăйлă тырпул туса илес шутпа „Тимĕр çырми" колхозпа ăмăртăва тухрăмăр",—теççĕ. Колхозниксен пухăвĕнче ăмăртăва тухма йышăннă. Анчах ку вăхăта çитсе те ăмăрту договăрĕ туса çирĕплетмен. Ĕçре те Тимĕрçырмисемпе ăмăртса ĕçлени сисĕнмест-ха. Çака-и ĕнтĕ чăн-чăн ăмăрту?

Колхоз агротехникăла ĕççене çителĕклĕ пурнăçласа пымаст. Иртнĕ çулта вăтам шутпа 8,99 центнĕр çнчах тĕштырă туса илнĕ. Республикипе туса илнĕ вăтам хисепрен чылай сахал ку. Çаксене шута илсе, кăçалхи çуракине тимлĕрех хатĕрленсе пымала пулнă ĕнтĕ. Вăйлă тырпулшăн кĕрешесси çуракинчен пуçланат. Анчах та „Хĕрлĕ Октябĕр" колхозра çакна асра тытса ĕçлемеççĕ. Хĕллехи агротехникăла ĕççене пĕтĕмпех туса çитермен. Производствăлă план çук. Колхозăн 5 çейăлкă, 3 çейăлкăн кирлĕ пайĕсем çук.

Кĕркуннех ку колхозра çуракине лайăх хатĕрлеме тытăннăччĕ. Ăмăрту сарса йарасси çинчен калаçатчĕç. 4000 лав торф кăларнă, минераллă им-çамсем кӳрсе килнĕ, 50 центнĕр кĕл пухса хунă. Çак ĕççемпех лăпланса ларнă. Тислĕк пĕр лав та кăларман.

Таса, суртлă вăрлăхсем аксан çеç кирлĕ чухлĕ тухăçлă тырпул туса илме пулат. Районри вăрлăх лабораторийĕ „Хĕрлĕ Октябĕр" колхозăн акмали вăрлăхĕсене анализ тунă. Вăрлăхсем кондициллĕ мар. Вăрлăхсене пĕтĕмпех тепĕр хут суртлама тивнĕ.

Колхозниксем тырпул тухăçне ӳстерсе пырасшăн. Колхоз правленин тата бригадирсен ĕçе тĕрĕс организацилесе, лайăх йертсе пыни кирлĕ. Анчах та колхоз правленийĕ вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре тивĕçлипе йертсе пымаст. Шупашкарти „Заготзерно" кантурĕнче ĕçлекенсен ĕçре васкавлăх çуккипе те палăртма кирлĕ. „Хĕрлĕ Октябĕр" колхозăн Шупашкартан 18 центнĕр суртлă тулă вăрлăхĕ улăштарса илмеле. 8 лавпа 4 хут Шупашкара пынă, вăрлăх илсе кайайман. Йулашкинчен: мартăн 5-мĕшĕнче килĕр, вăрлăх парса йаратпăр, тенĕ. Анчах та каллех лашасене ахаль йурттарса çӳремеле пулнă. „Заготзерно" кантурĕнче çавăн пек ĕçлени тивĕççĕр.

Çуракине тухичче шутлă кунсем йулчĕç. Çĕрĕç органĕсен колхозсене çуракине большевикла организацилĕхпе тухма пулăшмала, Ишлей райçĕрĕçпайĕнче ĕçлекенсем хăçпĕр колхозсенче çуракине хатĕрленесси мĕнле тăнине пĕлмеççĕ.

Т. М.

Тĕрĕслӳ мĕн кăтартат

Шупашкăр районне кĕрекен колхозсем кăçалхи çул вăйлăран та вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе Ишлей районĕпе социалисăмла ăмăртăва тухнă.

Халĕ районра социалисăмла ăмăрту договăрĕсене мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслес ĕç анлăн саралса пырат. Районра 113 ăмăртакан колхозран 72 колхозра социалисăмла ăмăрту договăрĕсене тĕрĕслесе йăхса, тĕрĕслӳ активсене райçĕрĕç пайне тăратнă. Тĕрĕслесе тухнă колхозсенчен нумайĕшĕнче çуракине халĕ те хатĕрленсе çитменни палăрат. Шорчакассинчи „Пионер" колхозпа Каганович йачĕпе тăракан колхозсем вăйлă тырпулшăн кĕрешес тĕлĕшпе пĕр-пĕрипе социалисăмла ăмăрту договăрĕ тунă та, договăра пурнăçлассишĕн кĕрешмен.

Вĕсем акмали вăрлăх çинчен манса хăварнă.

Каганович йачĕпе тăракан колхоз акмали вăрлăхсене тивĕçлипе тасатман. Вĕсен пурĕ 160 центнĕр акмали сĕлĕ вăрлăхĕ кондициллĕ мар. Çавнашкалах „Пионер" колхозра та çурхи тулă 54,6 центнĕр, урпа 10,4 центнĕр, 216 центнĕр сĕлĕ вăрлăхĕсене, вĕсем кондициллĕ мар пирки, тепĕр хут суртлама палăртнă. Анчах ăна тума тытăнман-ха. Колхозăн 1,8 центнĕр клевĕр вăрлăхĕ тата вылъăх кăшманĕн вăрлăхĕсем çук. Кусене тупасси çинчен аса та илмеççĕ.

Кунсăр пуçне, „Пионер" колхозăн 53 кӳлмĕли урапаран 25-шĕ çеç йусавлă. Çĕре çемçетмели выранти удобренисене кирлĕ таран пухса хатĕрлемен. Çавнашкалах Каганович йачĕпе тăракан колхозра та пĕр урапа та йусавлă мар. Удобренисене те çителĕклĕ пухса хатĕрлемен.

„Чашлавар" колхозăн урпа вăрлăхĕ пĕтĕмпех клешчлă, парса кондициллĕ мар. Шинер йалсоветĕнчи „Молния" колхозăн 42,4 центнĕр çурхи тулă, 42,4 центнĕр урпа, 92,5 центнĕр сĕлĕ пĕтĕмпех клешчлă. Кун пек тĕслĕхсене нумай колхозсенче тĕл пулма пулат. Анчах райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекен работниксем колхозсене пулăшу парас, тесе шутламаççĕ.

Çураки çывхарса килнĕ май, колхозсен акмали вăрлăхĕсем акма йурăхлипе йурăхлă маррине районри вăрлăх лабораторийĕн халиччен тĕрĕслесе пĕтерсе, результатсене тавăрса памала пулнă. Пайанхи куна 80 колхоза çеç тавăрса панă. Вăрлăх лаборатори пуçлăхĕ Васильйев йулташ хăйĕн ĕçне тивĕçлипе туса пымаст. Вăл пайанхи куна миçе центнĕр вăрлăх тĕрĕсленине те каласа параймаст.

Шупашкар районĕн çак çитменлĕхсене халех пĕтерсе, çуракине большевикла иртерма хатĕр пулмала.

Н. Михейĕв.

Електростанци татах та лайăхрах ĕçлеме пултарат

Електростанцисемпе електросетсенче ĕçлекен работниксен март уйăхĕнче пулса иртнĕ Пĕтĕм Сойузри канашлăвĕ хăйсен ĕçĕнчи çитменлĕхĕсене палăртса, çав çитменлĕхсене пĕтерме пĕтĕм електростанцисемпе електросетсенче ĕçлекенсене чĕнчĕ.

Канашлура палăртнă çитменлĕхсем Шупашкарти електростанцине те тивеççĕ. Çунтармали йапаласене ытлашши расхутлани, машинăсем çĕмрĕлсе кайни, ĕç дисциплини йапăххи,—кунти станцинче те пулнă. Акă, сăмахран, станцин икĕ дизель пур. Анчах вĕсем иккĕшĕ пĕр харăсах ĕçлеме пултараймаççĕ, çитменнине тата час-часах çĕмрĕлсе кайаççĕ.

Линисем çинче те çитменлĕхсем пулнă. Хăшпĕр çĕрте çутă час-часах сӳнсе ларнă, йе начар çутă пулнă. Провадсем çитеймен. Çавăн пиркийех тепĕр чухне електричĕствă кĕртессине чылай вăхăт хушши тăсса пынă. Калас пулат, дисциплинă таврашĕнчен те станцире ĕçлекенсем хушшинче çирĕпех пулман.

Кăçалхи çул станци кăшт лайăхрах ĕçлеме пуçлани палăрат. Ăна çак цифăрсем те аванах кăтартса параççĕ: станцин пĕррĕмĕш кварталта пĕр мĕлйун та 47 пин киловат-сехет енерги памала пулнă пулсан, вăл мĕлйун та 49 киловат-сехет парса, плана ытлашшипех тултарнă. Çавăн пекех укçа-тенкĕ пухассипе, ĕç укçи тĕлĕшпе те плана ытлашшипех тултарнă. Кунсăр пуçне тата линисене йусассипе те пысăк улшăнусем тунă. Акă 2-мĕш №-лĕ шкулта малтанах çутă начар пулнă, халĕ унта çутă парассине виçĕ фазăлă тупипе тата щитсене çĕнĕрен йусанă хыççăн çутă парасси лайăхланнă. Çавăн пекех стройтрестра ĕçлекенсем пурăнакан общежитинче те çутă парассине лайăх йĕркелеçĕ. Кунта çутă памали точкăна урăх будкă сумне куçарнă т. ыт. те.

Станцире ĕç вырăнĕсене, ĕç дисциплинне йĕркене кĕртнĕ май отличниксен йышĕ те хутшăнса пырат. Йулашки уйăхсенче ĕçре çĕнĕ стаханăвĕцсем палăрчĕç. Акă, машинă цехĕнчи Филиппăвпа Шчелчков йулташсен бригадисем куллен нормăсене 110—125 процент таран тултарса ĕçлеме пуçларĕç. Апрелĕн 3-мĕшĕнче Шчелчков йулташ бригади çутă парассипе плана 116 процент, 2-мĕшĕнче—113,7 процент тултарнă т. ыт. те. Вĕсем пĕчĕк ĕçренех хăйсем тăрăшнипе бригадирсем пулма тивĕç пулчĕç. Сăмахран, А. Филиппăвах илер. Вăл ку станцире 1929-мĕш çултанпа ĕçлет. Чăн малтанах масльонщикре ĕçленĕ, унтан ăна машинис помошникне куçарнă. Ку ĕçре кăштах ĕçлесен, вăл машиниса куçнă. 1936 çул вĕçнеле ăна тата ответлăрах вырăна—механик помошникне куçарнă.

Халĕ унăн бригадинче çирĕп йĕрке, кашни рабочи хăйне уйăрса панă ĕçре ĕçлет. Ĕçлекенсенчен нумайĕшĕ пĕчĕк ĕçсенчен ответлăрах ĕçе куçнă. Акă, Алексейĕвпа Слепьов йулташсем ĕлĕкрех вĕренекен шучĕпе тата масльонщикре ĕçленĕ пулсан, халĕ Алексейĕв машинис помошникĕнче, Слепьов— машинисра ĕçлеççĕ. Ĕçре йаланах лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ.

Филиппăв бригадинче политикăла массăлă ĕçе те йĕркелĕ туса пыраççĕ. Хальхи вăхăтра вĕсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенисене вĕренеççĕ. Канмали вăхăтсенче хаçатсем вуласа параççĕ. Филиппăв йулташ хăй те хаçатсем вуласа парат.

Анчах, çитĕнӳсемпе пĕрлех, станцире çитменлĕхсем те пур-ха. Вĕсене пийепле те пытарма йурамаст. Çитменлĕхсенчен пĕрри—социалисăмлă ăмăртăва сарса йамании пулат. Ăмăртăва лайăх сарса пырсан станци тата аванрах ĕçлеме пултарат.

Хар. Лисин. Мэдйаков.



„Ростсельмаш" савăт трактăрпа ĕçлемели 24 ретлĕ çĕнĕ çейăлкă тума тытăннă.

Ӳкерчĕк çинче (сылтăмран сулахайала): Техникăлă контроль пайĕн начальникĕ А. А. Ромаценко, çейăлкă конструктăрĕ Г. В. Буланăв, техконтроль инспектăрĕ А. А. Фролов тата сăнав станцинчи бригадир Пашковский йулташсем çĕнĕ çейăлкăн автоматне тĕрĕслеççĕ.

А. Братольубăв фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфото).

Сталинла епохăри аслăран та аслă монумент

Мускав йуханшывĕн хĕррине, Правительствă çурчĕ патне пырса тăрсассăн, есĕр çыранăн лешйенче аслă строительствă саралса выртнине куратăр. Ун пек пысăк строительствăна халиччен тĕнче курман-ха.

Çав территори çинче пулнă „Христос-спасител храмĕ" пумайах пулмаст-ха калама çук пысăк йапала пек курăнса тăратчĕ. Вăл „храм" çав территорин пысăк мар пайне кăна йышăнса тăнă, вăл халь тăвакан Советсен Дворецĕн пĕр Пысăк залне кăна та йрĕклĕ кĕрсе вырнаçнă пулĕччĕ. Вăл залăн çӳлĕшĕ 100 метр, урлăшĕ—140 метр, унта пĕр вăхăтрах 20 пин çын кĕрсе вырнаçмала пулат.

Советсен Дворецĕ пек тĕлĕнмеле пысăк сооруженине етемлĕх историйĕ халиччен курман-ха. Хальхи вăхăтра тĕнчери чи пысăк çурт—Нйу-Йоркри пĕлĕте тивсе тăракан Емпайр Стет Билдинг пулса тăрат. Унăн çӳлĕшĕ 407 метр. Вăл çурт ăшне Парижри пăллă Ейфел башнине кĕртсе пытарма пулат: вăл башньă çӳлĕшĕ 300 метр кăна.

Анчах тĕнчери çак калама çук пысăк çуртсем иккĕшĕ те Советсен Дворецĕ пысăкĕш çук. Вăл 125 пин тăваткăл метр çĕр талкăшĕ йышăнса тăмала пулат. Дворец йĕри-таврă утса çаврăнас тесен, икĕ километр тăршшĕ çул тăвас пулат. Çак 415 метр çӳлĕшлĕ Дворец тăррине Владимир Илйич Ленин статуйи туса лартаççĕ. Вăл статуйă çӳлĕшĕ 100 метр пулат.

Пысăк зала пĕр вăхăтрах кĕрсе вырнаçакан 20 пин халăх фильм курма пултартăр тесен, унта 4 кипоекран йĕркелесе лартмала пулат.

Дворецăн урамала тухакан пусми Мускаври Свердловски площчĕдĕн (ĕлĕк Театр площчĕдĕ пулнă) сарлакăшĕпе пĕр пек пулат. Советсен Дворецне кĕмелли çĕреле илсе пыракан тулти пусма 113 метр сарлакăш пулат.

Дворецăн пĕчĕк залĕ—Йевропăри чи пысăк театр çурчĕ пулат. Вăл Мускаври Пысăк театртан виçĕ хут пысăкрах пулат. Унта пĕр вăхăтрах 6.000 çын спектакль курма пултарат.

Советсен Дворецне пурĕ 30 пин çын кĕрсе вырнаçмала пулат. Ку ĕнтĕ—шăпах пĕр хула халăхĕ.

Советсен Дворецĕн пройект автăрĕсем Б. Иофан архитектăр, архитектурă академикĕ В. Шчуко тата профессăр В. Гельфрейх хăйсен ĕçĕ çинчен нумайах пулмаст „Правда" хаçатра çапла çырнă: „Пирĕн умра калама çук пысăк задачăсем тăраççĕ, вăл задачăпа тапдашма пултараканни архитектурă историнче халиччен пулман-ха".

Советсен Дворецĕн шалти пурнăçĕ мĕнтери пысăк та анлă пулни çинчен çакăн тăрăх чухласа илме пулат: унăн транспартĕнче 190 йахăн лифтсем, 90 йахăн ескалатăр пулат. Кашни лифт 10-шар тата 20-шер çын лартса çĕклеме пултарат.

Мускаври çĕклемели транспăрт хатĕрĕсем тăвакан савăт Советсен Дворецĕ вальлĕ пысăк хăвăртлăхлă лифтсем, ескалатăрсем, механизациленĕ гардеробсем тума пройектсем хатĕрлет.

Механизациленĕ гардеробсен пройекчĕсем питĕ интереслĕ. Халиччен ун пек гардеробсене пирĕн йатра та, йут çĕршывсенче те туман-ха. Йаланхи пек гардеробсем пулас пулсан, Советсен Дворецне виçĕ пин гардеробщик кирлĕ пулнă пулĕччĕ.

Мускаври çĕклемели транспăрт хатĕрĕсем тăвакан савăтри специалисçем Советсен Дворецĕ вальлĕ гардероб çекцисен пройекчĕсене туса хатĕрленĕ те ĕнте, вĕсем електромоторпа ĕçлесе тăмала пулаççĕ. Двореца пыракан çын хăйĕн тумтирне хăйех кабинăпа кĕртсе вырнаçтарма тата унтан илме пултарат. Унта нимĕнле гардеробщиксем те кирлĕ пулмаççĕ. Тумтирне илмешкĕн çын пурĕ те 39 çекунд кăна çухатат.

Советсен Дворецĕн кĕрсе тухмали 140 алăкĕнчен пиншер çын кĕрсе тухса çӳремеле пулат. Механизацилесе тунă тамбурăсем вестибульсене тарласа йĕпенесрен сыхлаççĕ.

Советсен Дворецне тул йенчен тутăхми хурçăпа витеççĕ, шалти çтенисене мрамăрпа витеççĕ.

Монуметлă живопис, скульптурă, барелйефсем, пысăк панносем—шалти пӳлĕмсен пуйанлăхĕ пулса тăраççĕ.

Хальхи вăхăтра Дворецăн центри пайĕн никĕсне тăваççĕ, вăл 650 пин тоннă тайат. Çуртăн металлран тăвакан çак пайĕн кĕлетки (вăл часах пулса лармала) 300 пин тоннă таймала пулат.

* * *

„Ман шутпа Сойуз столицинче, чи илемлĕ те лайăх площчĕдре тума тивĕçлĕ. çуртра, Дворецра рабочипе хресчен хăйсен горизонтне анлăлатма мĕн кирлине йалтах тупмала. Çакăнпа пĕрлех, вăл çурт малашнехи тĕреклĕ вăй-хăватăн, коммунисăмăн пирĕн парти çеç мар, тата лери, хĕрелнаçĕнчи çĕнтерĕвĕн емблеми пулса тăмала, тесе шухăшлатăп епĕ".

Çапла каланă Советсен Дворецне тăвасси çинчен 15 çул ĕлĕкрех, ССР Сойузĕнчи Советсен Пĕррĕмĕш Сйесĕнче революцин çулăмлă трибунĕ Çергей Миронович Киров.

Совет Сойузĕ çак сăмахсене халĕ ĕнтĕ пурнăçа кĕртет. Советсен Дворецĕ сталинла епохăри калама çук пысăк монумент пулса тăрат, унпа танлашаканни тĕнчипе те урăх çук. вăл етемлĕх тунă пур сооруженисенчен те, архитектурăн пур памйатникĕсенчен те çаплăрах.

(ТАСС).

Пурте хут пĕлекен пулаççĕ

Кăçалчен Иетĕрне районĕнчи „Хĕрлĕ майак" колхозра хут пĕлменнисен шучĕ 40 çынна йахăн пулнă. Кăçал вĕсем хут пĕлекен пулаççĕ. Вĕсене хут пĕлменнисен шкулĕнчен вĕрентсе кăларса хут сахал пĕлекенсен шкулне куçарнăччĕ. Халĕ хут сахал пĕлекенсен шкулĕнче аван вĕренсе пыракансене, 20 çынна, март уйăхĕнче вĕрентсе кăларчĕç. Ыттисем те вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пыраççĕ. Вĕсене майăн 1-мĕшне вĕрентсе кăлараççĕ.

Г. Йаробейкин.

Йĕркелех çук çерте

Шупашкар хулинчи хуçалăх организацисем тата ĕççыннисем пурăнмали çуртсемпе хватерсене йусама çулсеренех нумай укçа-тенкĕ хываççĕ. Кăна лайăх ăнланмала. Пуйан та культурăлă пурăнакан ĕççыннисем хватерсене лайăхрах пӳлĕмлĕрех тăвасшăн.

Çавсене пурнăçа кĕртес ĕçре промысла кооперацин вырăнĕ питех те пысăк. Промысла кооперацин çĕнĕ çуртсем тăвассине организацилеипе пĕрлех хватерсемпе çуртсене йусассине те организацилемеле. Анчах ку таранччен ĕççем промысла ертелсем ку йенĕпе начар ĕçлени çине кăтартса параççĕ.

Чăвашпромсойуз çистемине кĕрекен „Промкоопстрой" ертелĕн çуртсене йусассине организацилеме пысăк майсем пулнă. Анчах ертел руководителĕсем хăйсен ĕçне çĕнĕ строительствăра çеç курнине пула вăл условисемпе усă курмаççĕ. Ертел 1937 çулта çуртсем йусас ĕç планне 74 процент çеç тултарнă.

Çуртсене йусас плана тултарманнин сăлтавĕ — ертел руководителĕсем сӳрĕк ĕçленинче. Вĕсем йусав ĕçне йăвашлатнă. Çуртсене йусанă çĕрте учот ĕçне йĕркелемен. Тунă договăрсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыман. Çавăн пирки йусав ĕçне тăвассин хакĕ те нумай ӳснĕ.

Ертел руководителĕсенчен хăшпĕрисем хăйсен ĕçĕн пысăк ответлăхне халĕ те туйса илеймен-ха.

Ертелĕн строительствă материалĕсем тăвакан производствăсем пур. Вăл производствăсенче кирпĕч тата тĕрлĕрен посудăсем тăваççĕ. Ку йенĕпе те ĕççем йерипен пыраççĕ. 1937 çулта ертел кирпĕч кăларас плана 28 процент, тĕрлĕрен посудăсем тăвас плана 39,5 процент çеç тултарнă. Кирпĕч производствинче ĕç тухăçлăхĕ 8 процент чакнă. Çав вăхăтрах кирпĕчĕн хакĕ 1936 çулхипе танлаштарсан, 25 процент ӳснĕ. Ку йенĕпе кăçал та иртнĕ çулхи пекех начар ĕçлеççĕ.

Ертелте çирĕп йĕрке çук. Социалисăмла ăмăртупа стаханăвла йухăма пуçарман. Пайана илсен кунта пĕр стаханăвĕц те, ударник те çук. Кусем ĕнтĕ ертел руководстви çĕрĕк меслетсемпе ĕçлесе пыни çинчен каласа параççĕ. 1937 çулта ертеле пĕтĕмпе те пĕр член çеç йавăçтарнă. Ертел организациленĕренпе 130 пин тенкĕ убыткă панă. Кăçалхи ĕççене пурнăçлассн те хăрушлăх умĕнче тăрат. 1938 çулта кирлĕ йавăç материалĕсене вырăнсене турттарса тухман. Çавăн пекех кирпĕч кăларма хатĕрленесси те йапăх пырат.

Çак йĕркесĕрлĕхсем пĕтĕмпех Чăвашпромсойуз кусĕ умĕнче пулса пыраççĕ. Анчах Чăвашпромсойуз руководстви ертел çине çаврăнса пăхмаст-ха.

Чебоксарец.

Виçĕ республикă ăмăртăвĕ

(Хамăр корреспондентран)

Вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçре Тутар республикĕнчи колхозсемпе совхозсем иртнĕ çулта пысăк çĕнтерӳсем тунă. Ăна апрелĕн 3—4-мĕшĕсенче Хусанта пулса иртнĕ республикăри канашлу та уççăн кăтартса пачĕ. Канашлăва республикăри колхозсемпе МТС-чи чи аван ĕçлекен бригадирсем пухăннă. Вĕсем Тутар республикĕн руководителĕсемпе пĕрле 1938 çулта татах та вăйлă тырпул туса илмели майсем çинчен сӳтсе-йавса, сталинла 7—8 мĕлйард пăт тырăшăн кĕрешес тĕлĕшпе хăйсем çине конкретлă обйазательствăсем илсе, Чаваш тата Мордва республикĕпе социалисăмла ăмăрту договăрĕ йышăнчĕç.

1938 çулта Тутар республикĕ гектартан вăтам шутпа 15 центнĕр тĕштырă туса илессишĕн кĕрешет. Тырпул тухăçĕ йенĕпе илнĕ çав обйазательствăна тутар колхозĕсем пурнăçа кĕртессине стаханăвла тата ударлă ĕçлекен колхозниксен иртнĕ çулхи опычĕсем лайăх кăтартса параççĕ.

Октябĕр районĕнчи „Прийутовкă" колхоза республикăри колхозсем пурте пĕлсе тăраççĕ. Вăл колхоз кашни çулах вăйлă тырпул туса илет. Иртнĕ çулта вăтам шутпа çав колхозра 24-шар центнĕр тĕштырă илнĕ. Агрызск районĕнчи „Трудовик" колхозра 25,7-шер центнĕр тĕштырă, урпа 33-шер центнĕр, Йутазинск районĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхозра вăтам тухăç гектартан 23-шер центнĕр пулнă. Гектартан вăтам шутпа 100 пăтран ытла тĕштырă илнĕ колхозсем республикĕпе çершерĕн шутланаççĕ. Çав май колхозниксен ĕçкунĕн хакĕ те ӳссех пырат. 1935 çулта ĕçкунĕ пуçне вăтам шутпа 4,2-шар килограм тырă валеçнĕ пулсан, 1937 çулта чылай колхозсем çуршар пăт валеçнĕ. Калининск районĕнче вăтам шутпа 9,3-шар килограм, Октябĕр районĕнче—9,2-шар, Шагуровски районра 8,6-шар, Балтасински районра 8-шар килограм валеçнĕ. Малта асăннă „Прийутовкă" колхозĕнче кашни ĕçкунĕ пуçне пĕр пăта йахăн тырă валеçнĕ.

Çаксем ĕнтĕ колхозсем çирĕпленсе пынине, колхозниксен пурнăçĕ лайăхланса пынине, колхоз стройĕ çĕнтернине уççăн кăтартса параççĕ. Çак çитĕнӳсем, паллах, большевикла парти йертсе пынипе, партипе правительствă колхозла хресченсене йалан пулăшса пынипе çеç пулма пултарнă.

Иртнĕ çулта Тутар республикĕнчи колхозсен уй-хирĕнче пурĕ 4.270 трактăр, 2.000 комбайн, 1.500 молотилкă, трактăр вăйĕпе ĕçлемели 2.200 çейăлкă ĕçленĕ. Çуракине тухиччен республикăна татах 200 трактăр ЧТЗ, 350 трактăр СТЗ—НАТИ тата 190 трактăр У—2 маркăли килмеле. Ĕлĕкхи сухапуççемпе йăвăç сӳресем колхоз уй-хирĕнчен пачах çухалса пĕтнĕ.

Механизациленĕ йалхуçалăх техникине алла çавăрса илнĕ кадрсем те пит хăвăрт ӳссе пыраççĕ. Трактăр бригадисен бригадирĕсем, комбайнерсем, механиксем, шофĕрсем, агрономсем тата ытти квалификациллĕ çынсем республикĕпе вуншар пин шутланаççĕ. Вĕсем колхозлă йала çĕнетсе пырас ĕçре пысăк вăй пулса тăраççĕ.

1933 çулта республикĕпе вăтам шутпа трактăр пуçне 356 гектар сухаланă. Çав çултан пуçласа трактăрсен ĕç тухăçĕ ӳссех пырат: 1934 çулта 443 гектар, 1935 çулта 663 гектар, 1936 çулта 785 гектар, 1937 çулта 828 гектар ĕçленĕ. Трактăр пуçне 828 гектар ĕçленипе Тутар республикĕ трактăрсемпе усă курас тĕлĕшпе пĕтĕм Совет Сойузĕпе малтисен ретĕнче тăрат.

Чăваш тата Мордва республикĕпе тунă социалисăмла ăмăрту договăрĕ тăрăх, Тутар республикĕ 1938 çулта кашни 15 лаша вăйлĕ трактăр пуçне (аван çапнине тата çул çинче ĕçленине шута кĕртмесĕр) 950 гектар ĕçлеме обйазательствă илчĕ.

Çав обйазательствă, тӳрех каламала, питĕ пысăк. Анчах та, малта пыракан МТС-семпе трактăр бригадисен иртнĕ çулхи опычĕсене илсе пăхсан, тутар трактăрисĕсемпе трактăрискисем хăйсем çине илнĕ обйазательствăна тултарасси çинчен нимĕн иккĕленмели те çук.

1937 çулта трактăр пуçне çу каçиччен 1000 гектартан ытла ĕçленисем республикĕпе пурĕ 16 МТС, 62 трактăр бригади шутланат. Актанăшри МТС трактăр пуçне вăтам шутпа 1.614 гектар, Теччĕри—1.244 гектар, Муралински—1.226 гектар сухаланă. Мамадышра, Тат-Йелтанри, Октябĕр районĕнчи тата ытти МТС-сем трактăр пуçне пин гектартан ытла ĕçленĕ.

Уйрăм трактăр бригадисене илсен, ĕç тухăçĕ татах та пысăк. Акă, Актанăшри МТСтанцинче Нуретдинăв йулташ бригади трактăр пуçне 2.556-шар гектар, Кадимăвă бригади 2 470 шер гектар, Садрийĕв бригади 2.303-шер гектар сухаланă.

Чылай трактăриссемпе трактăрискăсем хăйсен çменинче пиншер гектар ытла ĕçленĕ. Вĕсенчен уйрăмăнах çаксене кăтартса пама тивĕçлĕ; Актанăшри МТСтанцинче Зинан Галисина трактăрискă 1 311 гектар, Олу Арасланăвă 1.085 гектар сухаланă. Хăйĕн сменинче пин гектартан ытла сухаланă трактăриссемпе трактăрискасĕм Арскри, Балтасински тата ытти МТС-сенче те чылай.

1938 çулта йалхуçалăх çулне ăнăçулăн иртерсе вĕçлессишĕн пыракан виçĕ республика ăмăртувĕнче мала тухассишĕн тутар колхозникĕсем, трактăриссемпе трактăрискăсем, йалхуçалăх специалисĕсем пĕтĕм вăйа хурса кĕрешме тăрăшнине канашлу уççăн кăтартса пачĕ. Çав шутпа вĕсем хăйсем çине конкретлă обйазательствăсем илнĕ, районпа район, колхозпа колхоз, бригадăпа бригадă социалисăмла ăмăртса ĕçлесси анлăн саралса пырат.

— Манăн бригадă,—тет Бана Кадимăвă,—1938 çулта Галисина бригадипе ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту договăрĕ тăрăх епĕр СТЗ трактарĕ пуçне 2.500 гектар сухалама пулатпăр.

Чукалински МТС-чи Шарафутдинăв бригадинчи трактăриссем, Кзыл-Йулдузски МТС-чи Зарубин бригадинчи трактăриссем урапалă кашни трактăрпа 1500-шер гектар, ЧТЗ трактăрпа 3.000 шер гектар сухалама сăмах пачĕç.

Сталинла вăйлă тырпулшăн кĕрешес тĕлĕшпе колхозсенче те социалисăмла ăмăртса ĕçлесси анлăн сарăлса пырат. Ăмăрту обйазательствисем тăрăх кашни гектартан „Майак" колхоз 22-шер центнĕр, „Трщче" колхоз 20-шер, Косарĕв йачĕпе тăракан колхоз 22-шер центнĕр тĕштырă илме пулнă. 20 центнĕршĕн кĕрешекен колхозсемпе бригадăсем çĕршерĕн шутланаççĕ.

Виçĕ республика хушшинче пыракан ăмăр ура мала тухассишĕн кĕрешме Тутар республикĕ пур йенĕпе те мобилизациленет. Çав кĕрешĕвечи малтанах комсомолецсем активлăн хутшăнаççĕ.

— Комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсен пур ĕçре те малта пымала. Çавăн пекех Сталин йулташ çулсерен 7—8 мĕлйард пăт тĕштырă илесси çинчен каланине пурнăçа кертсе çитерессинче те пирĕн çамрăксен малти ретре тăрса кĕрешмеле,—тет ПСÇЛКС Обком çекретарĕ Гимазетдинăв йулташ.

Çураки вăхăчĕ виçĕ республикăн социалисăмла ăмăртувĕнче кам мала тухассине татса паракан тапхăр пулса тăрат. Çавăнпа та Тутар республике халь пĕтĕм вăйа хурса çуракине лайăх иртерме хатĕрленет. Бригадирсен республикăри канашлăвĕ хыççăн, МТС-семпе колхозсем çуракине хатĕрленессинче кайа йулнă ĕççене пурне те хăвăрт туса çитересси курăнсах тăрат.

Виçĕ республикă—Чăваш, Тутар, Мордва республикĕсем хушшинче пыракан социалисăмла ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешӳ вăйлă пуласси уççăн курăнса тăрат. Кам мала тухасси çураки ĕçне лайăх хатĕрленсе çитнинчен, пур ĕçе те лайăх пахалăхпа туса иртернинчен килнине кашни колхоз руководителĕн, бригадирăн, колхозникăн лайăх пĕлсе тăмала; çавăн çинчен чăваш колхозникĕсен пĕр минутлăха та манмала мар, колхозпа колхоз, бригадăпа бригадă, колхозникпа колхозниксем социалисăмла ăмăртса ĕçлессине анлăн сарса йарса, ăмăртура мала тухассишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешмеле.

М. Костин.

Хусан. Апрелĕн 8-мĕшĕ.

Çĕнĕ районсем çуракине тытăнаççĕ

САРАТАВ. Облăçра ăшă çанталăк тăрать. Кăнтăр йенчи Питерски, Новоузенски, Антарски районсем уйхирти çуркуннехи ĕçсене тума тытăннă. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрти типнĕ вырăнсене сӳрелеççĕ.

* * *

ТАМБĂВ. Облăçри колхозсен уйхирĕсем йуртан тасалнă. Колхозсем çурхи ĕçсене тума тытăннă. Инжавински тĕштырă совхозĕ клевĕр акма пуçланă. Хоботовски районĕнчи колхозсем çурхи суха сухалаççĕ тата кĕрхи çĕртме тунине сӳрелеççĕ.

* * *

ЧЕЉАБИНСК. Йулашки кунсенче сывлăшри температурă 6 градус ăшă тăрать. Йур хăвăрт ирелет. Облăçăн кăнтăр йенчи районĕсенчи уй-хир бригадисем уйри стансене тухса кайаççĕ. Каргапољск районĕнчи колхозсенче кĕрхи çĕртме тунине сӳрелеççĕ.

* * *

ИРКУТСК. Облăçра ăшă çанталăк тăрать. Кĕр калчисем йуртан тасалса симĕсленнĕ. Качуг районĕнчи колхозсем кĕрхи çĕртме тунине сӳрелеççĕ.

* * *

НОВОÇИБИРСК. Хĕвеланăç-Çĕпĕрте çуркунне ир килнĕ. Уйхирсенче йур хăвăрт кайать. Новоçибирск облăçĕн Тогучински районĕнчи Красная волна колхозра çурхи суха сухалама пуçланă.

(ТАСС).

Саратăвра шарикоподшипник савăчĕ пулать

Саратăв çывăхĕнче Атăл çыранĕнче хамăр çĕршыври чи пысăк шарикоподшипник савăчĕ тума пуçланă. Вăл савăт çулталăкра 50 мĕлйун подшипник туса кăларма. Савăт строителствин площадкин талкăшĕ 72 гектар йышăнать.

Апрелĕн 8-мĕшĕнче савăтăн малтанхи цехĕсен—инструмент, ремонтпа механически тата ытти цехсен никĕсне хывнă. Вăл цехсем çитес çулта ĕçе кĕреççĕ.

(ТАСС).

Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн Коллегийĕ çинчен

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн коллегине çак составпа çирĕплетнĕ: коллеги председателĕ—Çулйĕр Халăх Комиссарĕ Л. М. Каганович йулташ, членсем: Л. Н. Бељский (Халăх Комиссарĕн пĕрремĕш заместителĕ), С. Н. Торопсенăв (заместител), П. П. Кучеренка (заместител), М. А. Волкăв (заместител), С. О Багайĕв (заместител), Т. В. Журављов, В. А Власăв, Н. В. Шчурăв тата Н. И. Романăв.

(ТАСС).

ХРОНИКĂ

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиуме Н. И. Пахомăв йулташа Шыв транспăрчĕн Халăх Комиссаренчен хăтарнă. Шалти ĕçсен Халăх Комиссарне Н. И. Йежов йулташа пĕр вăхăтрах Шыв транспăрчĕн Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме çирĕплетнĕ.

(ТАСС).

Австри профсойузĕсен пурлăхне арĕсленĕ

ЖЕНЕВА. (ТАСС). Базелри „Национал Цейтунг" хаçат Венăран пĕлтернĕ тăрăх, Австрири гитлерăвĕçсен руководителĕ Бўркер распорйажени панипе Австрири профсойусен пĕрлешĕвĕнче тăракан мĕн пур Австри профсойузĕсен пурлăхне арĕсленĕ. Австри хаçачĕсем Австрире сывăх вăхăтрах ĕç повиннăçĕ тăваççĕ тесе пĕлтереççĕ.

Пољшă разведкин мелĕсем

Прагăран пĕлтернĕ тăрăх, ССР Сойузĕнчен транзитпа Пољшă урлă тухса кайнă йут çĕршывсенчи темиçе граждăн ССР Сойузĕн Прагăри (Чехословаки столици) полпредствине çакăн çинчен каласа панă: ССР Сойузĕн территоринче пурăнакан Пољшă консулĕсем, Пољшă урлă кайма транзитлă визăсем панă чухне, вĕсенчен—йут çĕршыв граждăнĕсенчен—çведĕнисем илме хăтланнă, вăл çведĕнисем пĕрте консулсене пĕлме кирлĕ информаци мар, тĕллесе каласан, Пољшă консулĕсем совет çар-чаçĕсем, аеродромсем, çар савăчĕсем ăçта вырăнаçни çинчен, Хĕрлĕ Çар чаçĕсен политикăпа моралĕ тăрăвĕ çинчен т. ыт. çведĕнисем ыйтса пĕлме хăтланнă.

Йут çĕршыв граждăнĕсем Пољшă чикки урлă каçса кайнă чухне, йатарласа уйăрнă агĕнтсем вĕсенчен хаклă укçа тӳлесех ăнсăртран йулнă совет докуменчĕсене пурне те (справкăсем, пропусксем, профсойуз билечĕсем т. ыт.) çавăн пекех тата совет çĕршывĕнче туса кăларнă çиелти тумтирсене илсе йулаççĕ. Çавăнтах вĕсене укçа, гостиницăра тӳлевсĕр номĕрсем, таксипе тӳлевсĕр илсе кайма, кучченеç сĕнеççĕ т. ыт. те.

Пољшă чиккинчи Здолбуново станцинче „санатори йенчен тĕрĕсленĕ" чухне, „санатори врачĕ" транзитлă пассажирсенчен совет аеродромĕсем ăçтине, ангарăсен пысăккăшне, çулсем мĕнлине, утлă çар подразделенисенчи лашасем мĕн тĕслине те ыйтать. „Санитари врачĕ" хăшпĕр пассажирсенчен савăтсем, цехсем, унта пымали çулсем мĕнле выртнине çавăнтах хут çине ӳкерсе пама ыйтать т. ыт. ССР Сойузĕнчен транзитпа Пољшă урлă кайакан йут çĕршыв çыннисемшĕн пуриншен те обйазатељнă йеркепе тумали „санпроверкă" пĕтсен тин вĕсене паспăртсем тавăрса параççĕ.

Асăрхаттарни. ТАСС пĕлнĕ тăрăх, Пољшăн Мускаври посољствине çакăнта кăтартса паннисене тивĕçлĕн пĕлтернĕ.

„Ленфиљм" студийĕ „Великий гражданин" йатлă пысăк художествăлă фиљм кăларнă.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: З. Федăрăвă артискă Натă ролĕнче тата Р. Семенăв артис Колесникăв ролĕнче.

(Сойузфото).

Осоавиахим организацисен отчотлă пухăвĕсем

ТĂВАЙ. Осоавиахимăн пуçламĕш организацисенче отчотлă пухусем пуçланчĕç. Пухусенче Осоавиахим организацин районти 5-мĕш конференцийĕ йышăнса хăварнисене мĕнле пурнăçласа пыни çинчен сӳтсе-йаваççĕ.

Осоавиахимăн районти совечĕ пуçламĕш организацисене кирлĕ пек пулăшусем, кăтартусем парассине халĕ те çителĕксĕр ĕçлесе пырать-ха. Ку вăл Тĕптерт, Шухутнуç т. ыт. колхозсен çумĕнчи пуçламĕш организацисенче пулса иртнĕ пухусенче те лайăххăн курăнчĕ.

— Епĕр ĕçлесшĕн, анчах пире пулăшмаççĕ. Районти совета кайсан кайала тавăрса йараççĕ, — тет Тĕптерт колхозĕ çумĕнчи пуçламĕш организаци председателĕ Бирайевский йулташ.

Осоавиахимăн районти совечĕ пуçламĕш организацисене сахал тухса çӳренĕ. Вăл пуçламĕш организацисен ĕçĕсене, унти йертсе пыракан работниксене пĕлмест.

Отчотлă пухусем çитменлĕхсене хытă тишкĕрсе, малашне йеплĕ ĕçлемеллисене тĕплĕн кăтартса параççĕ. Самокритикă хĕрӳллĕн саралса пырать.

Верхилейĕв.

Йалăн куљтурлăхĕ ӳсет

Октабĕр революци пулсан тин Мăн-Йавăш йалне (Хĕрлĕ Чутай р.) çутă пурнăç килсе кĕчĕ. Револуци пуличчен, па çамрăксем çулран çул ытларах вĕренме пуçларĕç. Йалти хресченсен пурнăçĕ йăлтах улшăнчĕ, чухăнсемпе вăтамсем колхоза кĕрсе телейлĕ те савăнăçлă пурнăç çулĕ çине тăчĕç. Вĕсем пуйан та куљтурăлă пурнăçпа пурăнма пуçларĕç.

Ĕлĕкхи вăхăтра йалта чылайĕшĕн тырри-пулли çĕнĕ тырпул туса иличчен çиме çитмен, трахомлисен шучĕ пысăк пулнă. Хут пĕлекен 1 çын—Н. Терентйĕв кăна пулнă. Вăл та кăшт вулама, çырма çеç пĕлнĕ.

Револуци пулнăранпа йалти çынсенчен нумайĕшĕ ăстаçа вĕренсе тухрĕç: учителсем 6, зоотехник 1, агрономсем 3, фељдшер 1, инженер 1 т. ыт. те 30 çын ытла тĕрлĕрен учрежденисенче ĕçлеççĕ. Халĕ чиркӳрен клуб тума тытăннă. Йалта вăтам шкул пур. Унта Мăн-Йавăш йалĕнчен 150 çамрăк вĕренеççĕ. Кăçал хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсене пурне те вĕрентме тытăнчĕç. Кашни колхозник килне 2 екземпљар хаçат-журнал пырса тăрать. Колхозниксен килĕсенче чечексем çитĕнеççĕ, портретсем пӳрте илемлетеççĕ.

Хавасла та савăнăçлă, куљтурăлă пурнăçпа пурăнаççĕ Мăн-Йавăшри колхозникесем.

Ф. Çеменăв.

Çутçанталăка сăнаса тăраççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Йалхуçалăх техникумĕнче гидротехника отделенинче II-мĕш курсра вĕренекенсем çутçанталăка кашни кунах сăнаса тăраççĕ. Вĕсем йатарласа „метеорологическая сводка" йатлă хăма туса çакнă. Вăл хăма çине — сывлăш температурине, сывлăш нӳрлĕхне, çил вăйĕ мĕнле пулнине, çил хăш йенчен вĕренине, атмосферă пуснине т. ыт. те кашни кун çырса пыраççĕ.

Ку тĕлĕшпе ĕçлеме вĕсем 7 бригадăна уйăрăлнă. Кашни бригадăра 4 çын.

Г. Ç.

Хор кружокĕ май уйавне хатĕрленет

СĔНТĔРВĂРРИ. Кăçалхи феврађ уйăхĕнче йалхуçалăх техникумĕнче 34 çынран хор кружокĕ организациленĕччĕ. Кружока Маклашкинăри туллимар вăтам шкулта вĕрентекен Леонтйĕв йулташ йертсе пырать. Халĕ кружок членĕсем „Песня о Сталине", „Песня о родине", „Молодость", „Марш водолазов", „Звени наша песня родная" т. ыт. йурăсене те йурлама вĕренсе çитрĕç. Апрелĕн 5-мĕшĕнче, студентсен вечĕрĕнче, кружок членĕсем хăйсем вĕреннĕ йурăсене аван йурласа пачĕç.

Хор кружокĕн членĕсем Май уйавне çĕнĕ йурăсем вĕреннипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Гр. Çмирнов.

КАЛĂПĂР, ПОÇОЛĂКРА ПУРĂНАТĂН...

Ĕлĕкрех ку вырăна Грйазĕвскайа Стрелка тетчĕç. Ăна мĕншĕн апла калапп те паллă. Вăл стрелкă йенпе çуркунне йе кĕркунне тата çăмăрлă вăхăтра çула та каçса çӳреме çукчĕ.

Иртнĕ çул суйлавçăсем поçолăкран кӳскĕретĕн кулакан йатне улăштарма ыйтрĕç. Çавăнпа та ку поçолăк Чапайĕв йачĕпе тăрать. Суйлавçăсем татăклăн ыйтнипе поçолăкра хула совечĕ тата тепĕр ĕç турĕ: пысăк кĕпер тата Дзержинский урамĕн сулахай йенĕпе тротуар туса пачĕ. Урамне чул, торцовкă сарчĕ. Çулахи вăхăтра тата тĕмĕпле ĕç тăвасшăн-ха, поçолăк йенне, çурхи шывсем тапраннă вăхăтра та пулин, кăштах хăйăр турттарса хучĕç.

Пысăк ĕç ку. Суйлавçăсем панă наказ пурнăçланса пырать.

Поçолăкра пурăнакансене кунпа çитмест-ха. Тумали ĕçсем татах нумай. Калăпăр, есĕ Чапайĕвск поçолăкĕнче пурăнатăн. Ирпе тăратăн. Есĕ кайиччен чей вĕретсе ĕçесчĕ, тетĕн. Сăмавар вĕрет. Анчах, пăхатăн, чей ĕçме сахăр çук мĕн. Çăкăр та сахал.

Ака ĕнтĕ, ыйту:

— Ăçта кайас?

Ку вара чăн та шухăшлаттарать.

Ку поçолăка ваљљи çӳлти пасар вырăнĕнче çăкăр тата ерех лавки уçса панă. Тийесе пынă çăкăр пĕр-ик сехете сутма çитет, часăх пĕтет.

Пахча-çимĕç продуктисене тата ытти çимелли çимĕçсене поçолăкри лавкара илесси çинчен асăнма та кирлĕ мар. Вĕсем унта пулмаççĕ. Вара корзинкăсене çĕклесе сахăр, çăкăр, тăвар тата ытти çимĕçсене илме поçолăкри граждăнсемпе граждăнкăсем Хĕрлĕ площадри магазинсене утаççĕ. Поçолăкран площаде кайса килме, магазинсене кĕрсе тухнипе пĕрле, сахалтан та икĕ сехет иртет. Çавăн вăл вăхăтра вĕретнĕ чей те, пĕçерпĕ апат та сивĕнет.

Тепĕр ыйту.

Чапайĕв поçолăкне иртнĕ кĕркунне електроçутă парас пек калаçни илтĕнчĕ. Чăпах, Пасар урамĕн пуçĕнчен Колхоз урамне çити пĕр-икĕ йупа лартса вичтăвата кило çутă кĕртрĕç. Çакăнпа вара поçолăкра çутă кĕртни йатне тӳрĕç.

Иртсе çӳреме тĕттĕм. Кантăксенчен те краççин çути урама ӳкмест.

Хула совечĕ çак йенчен поçолăка кайăç хăварнă. Ку поçолăкри суйлавçăсен наказĕн хăшпĕр пункчĕ пурнăçа кĕмесĕр йулать.

Поçолăка çутă пани, вĕсепе ваљљи çимĕçсене поçолăкра сутмала туни кирлĕ. Ăна хула совечĕ итлеме тата тума тивĕçлĕ.

Ив. Моçейĕв.

500 тенкĕлĕх илнĕ

Куславккă комбинатĕнчи хапрăк савăт шкулĕнче вĕренекенсем Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билетне 500 тенкĕлĕх илчĕç.

Лотерей çарассине уйрăмăнах Сурикăв, Петров, Чернышĕв йулташсем аван хутшăнса ĕçлерĕç.

И. Константинăв.

Выљљав укçисене тӳлени

СЕНТĔРВĂРРИ. Районри перекет касси 1938 çулта Иккĕмĕш пилĕкçулăх (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) займăн 5-мĕшпе 6 мĕш тиражĕсен выљљав укçине мĕн пурĕ 16.040 тенкĕ тӳленĕ. Вăл шутран 6-мĕш тираж выљљавĕпе 5.080 тенкĕ тӳленĕ. Акозинăпа Шуршăлти уйрăмĕсенче 6-мĕш тираж выљљавĕпе 1.889 тенкĕ тӳленĕ.

Ваç. Çмирнов.

Колхоз клуб лартать

ТРАК. Йеншикри „Çĕнĕ вăй" колхоз кăçал 200 çын вырнаçмалăх çĕнĕ пысăк клуб тума пуçларĕ.

Клуба çитес кунсенче туса пĕтерсе, май уйавĕн кунĕнче уçаççĕ.

М. Дмитрийĕв.

Радио ĕçне вĕренчĕç

СЕНТĔРВĂРРИ. Районри радиоузел, колхозсенче радио ĕçĕпе ĕçлекенсене хатĕрлес майпа мартăн 5-мĕшĕнче курс уçнăччĕ. Курс хăйĕн ĕçне мартăн 31-мĕшĕнче пĕтерчĕ. Курсран 12 çын вĕренсе тухрĕç. Вĕренсе тухнă йулташсем радио ĕçĕпе ĕçлеме колхозсене саланчĕç.

Виçĕ кашкăр тытнă

СĔНТĔРВĂРРИ. Шуршăл йалсоветĕнчи „Çĕнĕ йал" колхоз членĕ Александр Йудин мартăн 22-мĕшĕнче 2 кашкăр, мартăн 31-мĕшĕнче пĕр кашкăр тытнă. Пĕр кашкăрĕ амă пулнă, хырăмĕнчен 6 çурă тухнă. Йудин пĕлтĕртенпе 5 кашкăр тытнă ĕнтĕ.

Охотникăв.

Шахмăт турнирĕ

ШĂХАСАН. Мартăн 30-мĕшĕнче Ăвăс-пӳрт Кипечри вăтам шкулта шахмăт турнирĕ пулса иртрĕ. Турнирта 10 çын выљљарĕç. Весенчен чи лайăх выљљаканни С. И. Будрйанăв преподавател пулчĕ. Вăл 9 очко илчĕ.

К. Лазăрĕв.

Вăрманта тăрăшса ĕçлеççĕ

Хĕрлĕ Чутай. Мăн-Йавăшри Сталин йачĕпе тăракан колхоз вăрман хатĕрлевĕнче тăрăшса ĕçлет. Кăçал колхозăн 1.600 кубла метр вăрман касса хатĕрлемеле пулнă, пайанхи куна 1.568 кубла метр касса хатĕрленĕ.

Плана çак кунсенчех тултарас тесе халĕ вăрманта 30 çын çуран, 10 çын лашапа ĕçлеççĕ.

Вăрманта столовăй пур. Ку та колхозниксене тăрăшса ĕçлеме пулăшать.

Колхозниксем нумайĕшĕ вăрман хатĕрлев планĕсене 200—250 процентшер тултарчĕç. Ака Т. Гуçĕв, И. Гераçимăв, Н. Тимофейĕв, С. Йефимăв, Н. Захарăв, М. Игнатйĕв йулташсем 2 хут ытла пурнăçларĕç. 1-мĕшпе 3-мĕш бригадăсем 105 процентшер тултарчĕç.

Семенăв.

Сăр çинче

ЙЕТĔРНЕ. Йетĕрне тĕлĕнче Сăр шывĕ çинче мартăн 16-мĕшĕнчех шыв хăпарма пуçланă. Малтан куллен пĕрер сантиметр хăпарнă. Йулашки кунсенче вăйлăн хăпарса пырать. Апрелĕн 5-мĕш тĕлне мĕн пурĕ 545 сантиметр хăпарнă. Иртнĕ çуркунне пĕтĕмпе те 530 сантиметр çеç хăпарнă пулнă.

Н. Цветков.

Ответлă редактăр Н. М СЕМЕНĂВ.

„Чăвашкино" трестне

саслă тата ахаљ аппаратсемпе вырăнтан-вырăна çӳресе ĕçлеме

киномеханиксем кирлĕ

Условисемпе паллашма трест кантурне пымала.

3—3

1937 çулхи декабĕрĕн 31-мĕшĕнче Центросойуз президиумĕ тата кăçалхи мартăн 21-мĕшĕнче Чăвашсойуз президиумĕ йышăннă постановленисем тăрăх

Чăвашсойузăн Улатăрти тата Çĕмĕрлери таварсем тăрататакăн базисене пĕтермеле тунă.

Организацисен, учрежденисен тата уйрăм çынсен ку базăсен ĕçĕсем тăрăх претензисем пур пулсан, 1938 çулхи апрелĕн 20-мĕшчен Ликвидкома тăратмала.

Улатăрти бази—УЛАТĂР хули, ЧАССР.
Çĕмĕрлери бази—ÇĔМĔРЛЕ хули, ЧАССР.

Кăтартнă срук иртсен нимĕнле претензи те йышăнмаççĕ.

3—2

Йăвăç çуракан тата йăвăç каскалакан рабочисен профсойузĕн Тĕп Комитечĕн

ИЛЙИНКĂРИ КАНМАЛИ ÇУРЧĔ

çак должнăçсенче ĕçлеме йышăнать:

тухтăр, сестрасем, официанкăсем, кастељанша, дачăвенчи уборшчицăсем, çимĕç продуктисем тăрататакан агĕнтсем, кухњăра ĕçлекен работницăсем, повăрсем, пахчаç, куљтработник тата физкуљтурник.

Ĕçлеме кĕрес текенсен алăра паспăрт тата йулашки вырăнта ĕçленĕ çĕртен илнĕ справкă пулмала.

Зайавленисене апрелĕн 25-мешĕччен çак адрĕспе памала: Шупашкар хули, Сойузсен çурчĕ, йăвăç çуракан тата йăвăç каскалакан рабочисен профсойузĕн Облăçри Комитечĕ Русин йулташа.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче Сойуз Обкомĕнче зайавленисем тăрăх татăклă йышăну пулать. Майăн 3-мĕшĕ тĕлне йышăннисен ĕçе пымала.

2—2

Шкул директăрĕ тата вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ

Шкулпа учителĕн ĕçне шкул заведуйушчийĕ йе директăрĕ тата вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ йертсе пыраççĕ.

Шкул заведуйушчийĕсемпе директăрĕсен хĕллехи канашлăвĕнче учителпе унăн ĕçне йертсе, тĕрĕслесе пырас ыйтăва уйрăмăн сӳтсе-йавнăччĕ. Унччен хăшпĕр шкул директăрĕсемпе заведуйушчийĕсем (уйрăмах йалти шкулсенче) хăйсен ĕç вырăнне чухлаймасăртарах тăнă, учителĕн ĕçне кирлĕ пек йертсе пыман, вĕренӳ пахалăхĕшĕн кĕрешессине тивĕçлипе йĕркелемен. Хĕллехи канашлусем шкул директăрĕпе заведуйушчине татăклă кăтартусем пачĕç. Шкул директăрĕ йе заведуйушчийĕ шкулта пуç пулса тăрса, шкулăн пĕтĕм ĕçĕшĕн ответ тытать, çавăнпа та вăл шкул пурнăçĕн мĕн пур йенĕсемпе интересленмеле, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕ кашни уйрăм класра, кашни уйрăм дисциплинăпа мĕнле пынине лайăх пĕлсе тămала, учителĕн ĕçне куллен тĕрĕслесе пырса, ăна вăхăтра татăклă пулăшу памала, кашни учителрен тата пĕтĕм коллективран ачасене вĕрентессине воспитани парас ĕçре пахă резуљтатсем ыйтмала.

Шкулсемпе йертсе пырас тĕлĕшпе пирĕн лайăх пример кăтартакансем пур. Сăмахран, Шупашкарти 2-мĕш номĕрлĕ вăтам шкулта директăрпа вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ хăйсен пĕтĕм ĕçне планпа туса пыраççĕ. Шкул директăрĕ Г. Д. Данилăвпа вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ Богатырйова йулташсем кашни учителĕн ĕçне, кашни ача вĕренӳре мĕнле ĕлкĕрсе пынине тĕплĕн пĕлсе тăраççĕ. Кашни уйрăм вĕренекенĕн интересĕсене пĕлеççĕ, учителсене татăклă кăтартусем параççĕ.

Анчах кун пек йĕрке пирĕн шкулсенче пур çĕрте те мар-ха. Уйрăмах начар ĕçлеççĕ йалти туллимар вăтам шкулсен директăрĕсемпе вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕсем. Чылай çĕрте туллимар вăтам шкулсен директăрĕсем шкулти завхоз вырăнче çӳреççĕ. Вĕрентӳпе воспитани ĕçне директăр та, вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ те йертсе пымаççĕ. Сăмахран, Шупашкар районĕнчи Çĕнйалти туллимар вăтам шкулăн директăрĕ Стољаров шкула йертсе пырас ĕçе пачах пăрахнă. Учителсен ĕçне никам та тĕрĕслемест, уроксем кунта час-часах плансăр иртеççĕ. Директăр хăй урок планĕсем нихăçан та тумасть. Математикăпа вĕрентекен Шорков преподавател урок планĕ тăвасси ытлашши ĕç тесе шутлать.

Шкул пурнăçĕ çине çакнашкал ответсăр пăхнине Шупашкар районĕнчи Протопопихă тата Иккасси шкулĕсенче те курма пулать. Ку шкулсенче директăрпа вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ хăйсен вырăнĕсенче формăшăн кăна лараççĕ. Шкул руководствине вĕренекенсем те, вĕрентекенсем те сахал туйаççĕ. Кунти пуçлăхсен плансăр ĕçлесси куллĕнхи йала пулса тăнă. Мартăн 18-мĕшĕнче Иккассинчи туллимар вăтам шкула инспектăрсем тĕрĕсленĕ чух, шкулти вĕрентӳ пайĕн пуçлăхне, вăл урок планĕсем хатĕрлемен пирки, заљатине кĕртмен. Пуçлăхсене кура, уйрăм учителсем те шкулта ытахаљтен кăна ĕçлесе пыраççĕ. Урока хатĕрленмеççĕ, диктовкă ваљљи текстсем малтан хатĕрлесе хумаççĕ, çавăнпа та диктовкăсем вĕренсе пыракан материала çирĕплетме пулăшмаççĕ. Программă мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине директăрпа вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕ тĕрĕслемен пирки, учителсем чылай чух вĕрентӳ йĕркине пăсаççĕ. Нагљаднă вĕрентесси пирки сахал шухăшлаççĕ, мĕншĕн тесен, кăна тума урока лайăх хатĕрленни кирлĕ.

Вĕренсе иртернĕ материалсене аса илмели уроксем (повторение) уйрăмах начар пулса пыраççĕ. Аса илмели урока учителсем пачах хатĕрленмеççĕ, плансем тусан та, вĕсенче иртнĕ урокăн номĕрне кăтартнисĕр пуçне нимĕн те çук. Вĕреннĕ материала аса илесси—вĕренӳ çулĕн çак чĕрĕкĕнче тĕп ыйту пулса тăрать. Ку ыйтăва учителсемпе шкул пуçлăхĕсен шкулти педагогикăла канашлусенче тĕплĕн сӳтсе-йавмала.

Пуçламĕш шкул заведуйушчийĕсем хăйсен шкулĕсемпе тата сахалтарах ĕçлеççĕ. Хăй класĕсĕр пуçне, заведуйушчи урăх нимĕн те пĕлесшĕн мар. Ака, сăмахран, Платкари пуçламĕш шкул заведуйушчийĕ Вершинин йулташ шкулти тепĕр класра вĕрентекен Аверкийĕв учителĕн ĕçĕпе пачах интересленмен, çавна пула, Аверкийĕв хăйĕн класне тӳсме çук йапăхтарса йанă. I-мĕш класра вĕренекенсем сăмахсене буквăшерĕн çеç тата-тата вулаççĕ, çырма тата начартарах çыраççĕ. III-мĕш класра диктовкăсене вĕренекен материалпа çыхăнтармасăр туса пынă.

Кам ответ тытмала-ха ĕнтĕ Платка шкулĕнчи пĕррĕмĕш клас йапăхнишĕн? Кунта никам та мар, чи малтан шкул заведуйушчийĕ Вершинин, унтан пуçлăх тĕрĕслеменнине пула сӳрĕлсе кайнă Аверкийĕв учител ответлă.

Пĕлӳ тĕрĕслевĕ пуçланасси нумай вăхăт йулмарĕ. Çак кĕске вăхăтра шкул директăрĕсен, заведуйушчисен тата вĕрентӳ пайĕн пуçлăхĕсен кашни учителĕн çулталăк хушшинчи ĕçĕпе тĕплĕн паллашмала, кăçал мĕн вĕреннине аса илес ĕçе йĕркелес пирки, кайа йулса пыракан ачасене пулăшас пирки учителсене татăклă кăтартусем памала. Партипе правителствă шкулсене йертсе пырас ĕçе лайăхлатмали майсене тĕплĕн кăтартса панă. Пирĕн шкулсен пуçĕнче тăракан йулташсем çав кăтартусене пурне те тĕрĕссĕн пурнăçласан тин вĕрентӳпе воспитани ĕçне çӳлĕ вырăна хăпартĕç, пĕр класра иккĕмĕш çула йулассине пĕтерĕç, социалисăмлă тăван çĕршыва паха пĕлӳлĕ çынсем парĕç.

П. Д. ДАНИЛАВ.

Çутĕç халăх комиссариачĕн инспекторĕ.

„Чăваш Коммунĕ" çыrăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2. т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 180 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 301. Тираж 16.250 экз. П. б. 85—94 см. 1—1 п: л: